# Юратнă вулаканăмăрсене уявпа саламлатпăр!

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

52 (818) №, 2013, раштав, 28

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

## Хаклă ентешĕмĕрсем!

**Сире Çĕнĕ 2014 çулпа тата Раштавпа чунчĕререн саламлатăп!**

Хыçа юлакан 2013 çул республикăшăн çăмăл пулмарĕ, çапах, пĕтĕмĕшле илсен, вăл ăнăçлă иртрĕ. Пирĕн пĕрлехи ĕçе тĕрлĕ шайра пысăк хак пачĕç. Эпир çакăнпа мăнаçланма пултаратпăр!

Чăваш Енре хальхи йышши тăватă предприяти хута кайрĕ, пысăк тухăçлă çĕр-çĕр ĕç вырăнĕ йĕркеленчĕ. Строительство комплексĕ çине тăрса ĕçленипе кашни çын пуçне пурăнмалли çурт-хваттер хута ярас енĕпе республика федерацин Атăлçи округĕнче лидерсен йышне кĕчĕ. Пирĕн хресченсем пахча çимĕçе, тыр-пула пухса кĕртес тесе çанталăк япăххине пăхмасăрах тар тăкрĕç. Сывлăх сыхлав тытăмне модернизацилессипе çыхăннă программа лайăх пурнăçланчĕ. Йăлăмра пурăнакансем патне çут çанталăк газĕ çитермешкĕн “Газпром” 500 миллион ытла тенкĕ уйăрчĕ. Çакă Атăл леш енне аталантарма, сывлăха çирĕплетмелли учрежденисен сетьне йĕркелеме май парать.

Пирĕн чи пысăк пуянлăх, пуласлăх – ачасем. Пурнăçа юратакан, сывă ачасем тулли те çирĕп çемьере çеç ӳсме пултараççĕ. Çавăнпа Чăваш Енре çемьесене, амăшĕлĕхпе ачалăха пулăшмашкăн тĕрлĕ мера йышăннă, вĕсем пурнăçланаççĕ. Çĕнĕ 11 садик уçрăмăр, шкул ӳсĕмĕнченхи ачасен учрежденисенче пĕчĕккисем валли 6,5 пин вырăн хатĕрлерĕмĕр. Çакă 3-7 çулсенчи ачасене пурне те тенĕ пекех черетре тăрассинчен хăтарма май пачĕ.

Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем тăрăшнипе республика физкультурăпа спорт енĕпе “Раççей регионĕ” номинацире наци премине тивĕçрĕ. Чăваш Ен 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионачĕ, 2016 тата 2018 çулсенче хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокĕ ирттерме ирĕк илчĕ. Иккĕленместĕп: тĕнче шайĕнчи ят-сумлă çак ăмăртусем паллă пулăм пек асра юлĕç, физкультурăпа спорта аталантарма май парĕç.

Хаклă юлташсем! 2014 çул Раççейре – Культура çулталăкĕ. Чăваш Ен малашлăхĕ хамăрăн ĕçчен, ырă та уçă кăмăллă халăхăн культура еткерлĕхне, йăли-йĕркине упраса хăварнинчен килет. Пултарулăх енĕпе аталанма, ăс пухма, тăнăçлăха упрама, туслăха çирĕплетме условисем тусан çеç эпир малашлăха шанчăклăн пăхма пултаратпăр.

Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, юрату сунатăп! Кашни килтех, кашни çемьерех ытлăçитлĕх, килĕшӳ, ăнăçу хуçаланччăр! Уяв ячĕпе саламлатăп Сире! Çĕнĕ 2014 çулпа!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М.ИГНАТЬЕВ.**

*Çĕнни-не шыранă чух кивви-не ан çухат.*

**Каларăш.**




| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 28.12 | – 4 | – 2 |
| 29.12 | – 2 | – 1 |
| 30.12 | – 2 | – 1 |
| 31.12 | – 1 | – 1 |
| 01.01 | – 2 | – 5 |
| 02.01 | – 3 | – 15 |
| 03.01 | – 21 | – 25 |




М.ТУМАЛАНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.

4 стр.

# Хĕл Мучине сасăран палласçĕ

***Çавра çилпе ăмăртса, юр пĕрчисене ташлаттарса, урхамахĕсене васкатса килет пирĕн пата Хĕл Мучи. Парне тултарнă кутамккине çуна çине хунă вăл. Уявпа саламлама хыпаланаканскерне ачасем те, аслисем те çав тери кĕтеççĕ. «Хĕл Мучи, ăçта çитнĕ эсĕ? Сассуна пар!» – пĕлес килчĕ манăн. Çил манăн сăмахсене хула, ял, хир урлă вĕçтерсе Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьеле илсе çитернĕ. Çынсем шăпах çав тăрăхра Хĕл Мучине курнă теççĕ. Эх, пĕр вырăнта кĕтсе ларма чăтăм çук. Ăна хирĕç каяс пулать...***

## Юр Пикене хăй суйлать

Асамлăх валеçекенсене ялти культура çуртĕнче шыраса тупрăм. Хĕл Мучипе Юр Пике аслă ăру çыннисене ташлаттарса юрлаттараççĕ, сăвă калаттараççĕ. Тыл, вăрçă ветеранĕсем, салтак арăмĕсем, амăшĕсем капăр чăрăш тавра çаврăнаççĕ. «Ачалăха таврăннăнах туйăнать», – куççульне шăлать хăшĕ-пĕри. Çапах паян кашнин пит-куçĕ кулăпа çуталнă. Вĕсене ЧР салтак амăшĕсен комитечĕн ертӳçи Лариса Егорова уява чĕннĕ. Пĕрле пуçтарăнса калаçма май тупать çаврăнăçуллă çав хĕрарăм. Тивĕçлĕ канурисене «Тевет» ушкăн юрăçисемпе шкул ачисем те саламлама килнĕ. Вĕренекенсем Машăпа упа çинчен юмах каласа кăтартрĕç.

Хĕл Мучипе çывăхрах паллашма май килчĕ. Геннадий Сорокин çак тума 65-мĕш хут тăхăнние пытармарĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех шкулта ĕçленĕ вăл. Физкультура учителĕ, директор, директор çумĕ пулнă. Халĕ ОБЖ вĕрентет. «Ытти çул уява Юр Пикепе иксĕмĕр ятарласа лаша кӳлсе килеттĕмĕр. Пире курсан ачасем уйрăмах хытă савăнатчĕç», – пуçларĕ калаçăва Геннадий Сергеевич. Кăçал та тĕпренчĕксен кăмăлне çавăрма кая юлман-ха. Сăмах май, Сорокинсем хăйсем те нумай çул лаша усранă. Килте тапăртатса тăракан урхамахсем тавралăха уяв сĕмĕ кĕртме пулăшнă ăна.

...«Кĕлеткӳ тĕреклĕ, калаçма пултаратăн», – Красноармейски районĕнчи шкула физкультура вĕрентекенне ĕçлеме вырнаçсан пĕрремĕш хут Хĕл Мучи тумĕ тыттарчĕç мана. Килĕшрĕм. Çавăнтанпа çак сăнарпа çывăхлантăм. Çи-пуçа улăштарсан та çынсене ырă тăвас килет», – тăсăлать калаçу.

Хĕл Мучи Юр Пикене хăй суйласа илнине палăртрĕ. Çур сăмахран пĕр-пĕрне ăнланни кирек хăш лару-тăрăва шӳте çавăрма пулăшать. Кăçал Светлана Белова библиотекарьпе пырса кĕчĕç вĕсем культура çуртне. Чăрăш тавра пуçтарăннисене 13 çул иккĕшĕ пĕрле саламланине пĕлтĕм. Курăр-ха – хăйĕн тĕпренчĕкĕсем çитĕннĕ пулин те Юр Пике çаплипех хĕр пек илĕртӳллĕ.



ЭСТАФЕТА

# Чуна хĕмлентерчĕ Олимп çулăмĕ









**Ĕнер ятарлă пуйăспа Олимп çулăмĕ Чěмпěртен Шупашкара çитрĕ. Çĕнĕ çул умĕн урамсем ахаль те капăр курăнаççĕ, эстафетăна кĕтсе илме те тĕплĕ хатĕрленнĕ шĕкĕр хуламăр. Пур çĕрте юрă-кĕвĕ илтĕнчĕ, савăк кăмăл хуçаланчĕ. Палăртнă самант тĕлне чукун çул вокзалĕ тавралла халăх лăк туллиехчĕ. Пурте чуна хĕмлентерекен çулăма илсе килессе чăтăмсăр кĕтрĕç. Сцена çине пултарулăх коллективĕсем юрă-ташăпа тухрĕç. Эстафетăн партнерĕсем пуханнисене парнепе хавхалантарчĕç.**

**Тăван хуламăр Олимп çулăмне йышăнма чăннипех те тивĕçлĕ. Пирĕн Чăваш Ен спортсменĕсем çĕр-шыв тата тĕнче спорчĕн аталанăвне пысăк тӳпе хываççĕ. 40 ытла ентеш Олимп вăййисене 1952 çултанпа хутшăнать. Çĕнтерӳçĕ карталашки çине хăпарнă ентешсене тĕнчипех пĕлеççĕ. Чăваш Енĕмĕр çулсеренех спорт енĕпе çитĕнӳ тăвать.**

12 сехетре уява Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Чулхула чукун çул пуçлăхĕн çумĕ Александр Черемнов, Олимп вăййисен чемпионки Елена Николаева уçрĕç. Чемпионкăна Чăваш Енре иртекен эстафетăн факелне пĕрремĕш йăтма шаннă. Çулăма чĕртиччен журналистсен унпа калаçма май килчĕ. «Кăмăл-туйăма ăшра пытарма та çук. Олимпиада – вăй-хал, çамрăклăх парнелекен хăйне евĕр мероприяти. Унта лекме кашни спортсмен ĕмĕтленет. Ку енĕпе мана ăнăçрĕ, эпĕ виçĕ хутчен çĕр-шывăн тата республикăн чысне тĕп стартсенче хӳтĕлерĕм. Олимпăн çитес вăййисем Раççейре иртнишĕн те савăнатăп, çулăм манăн тăван хулара пулнишĕн те паянхи куна ĕмĕрлĕхе асра хăварăп», – терĕ вăл.

Елена Николаевăн факелне чĕртнĕ хыççăн эстафета Хула çум урамĕнчен старт илчĕ. Ун хыççăн çулăм Афинăри вăйăсенче кĕмĕле тивĕçнĕ Олимпиада Иванова аллине куçрĕ. Унтан вăрăм дистанцие чупассипе Сиднейран бронзăпа таврăннă Владимир Андреев, 1992 çулти вăйăсен çăмăл атлетика кĕмĕл призерĕ Лидия Григорьева, Ольга Богословская тележурналист, Бостонри тата Чикагори марафон çĕнтерӳçи Светлана Захарова, 2012 çулти вăйăсене хутшăннă çичĕ енлĕ кĕрешӳçĕ Кристина Савицкая, Лондонри марафонта бронзăна тивĕçнĕ Татьяна Архипова тата ыттисем çак хисепе тивĕçрĕç.

Чи кăсăклă самантсенчен пĕри каçхи пилĕк сехет çурăра Хĕрлĕ тӳремре иртрĕ. Çулăма çуна çинче Хĕл Мучипе унăн стражникĕсем илсе килчĕç. «Амăшĕн палăкĕ» умĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевăн факелĕ чĕрĕлчĕ. Аса илтеретпĕр, 33 километра тăсăлнă маршрута 163 факел йăтакан хутшăнчĕ.

Олимп чашăкне чĕртме 1972 çулти Олимп вăййисен чемпионне, СССР спорт мастерне, йĕлтĕрçине Владимир Воронкова шанчĕç. «Маншăн ку пысăк чыс та яваплăх. Хумхану мана Олимп вăййисен стартне тăнине аса илтерет. Кĕçĕр çавна пулах йĕркеллĕ çывăрайман...» – тенĕччĕ Владимир Петрович Правительство çуртĕнчи пĕтĕмлетӳ пресс-конференцине хутшăннă май. «Олимпийский» стадионти уяв феерверкпа, лазер «3-D-шоупа» тата чылай кăсăклă та савăнăçлă самантсемпе вĕçленчĕ.

Хусан чукун çулĕпе килекен эстафета Владивостокран чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче старт илнĕ. Хăйĕн çулне вăл Сочире вĕçлĕ. Шупашкар – пуйăспа çула тухнă 3-мĕш хула. Çулăм 83 кунра 17,7 пин километра парăнтарĕ. Шупашкартан пуйăспах Йошкар-Олана çул тытĕ.

**Алина ИЗМАН.**

ЧР Физкультурăпа спорт министерствин сайтĕнчи сăн ӳкерчĕксем.

МАН КИЛЕС



**Маргарита ИЛЬИНА:**

Те çĕр чăмăрĕ хытăрах çаврăнма пуçларĕ, те пуç çĕклемесĕр ĕçленипе вăхăт иртни сисĕнмест – черетлĕ Çĕнĕ çул тахăш вăхăтра ĕрĕхсе çитрĕ? Лаша, Китай гороскопĕпе килĕшӳллĕн кăвакскер, тапăртатса та çитрĕ, алăкран шаккать. Çуна çине телейпе юнашар юрату, сывлăх та телей, ăнăçу тата тулăх пурнăç лартса килсен тем пекехчĕ...

Çулталăк хушшинче кун çути курнă 52 номере тепĕр хут уçкаласа пăхатăп – мĕнле ыйту кăна хускатман, кам пирки кăна çырман... "Хамăрах çавăн чухлĕ ĕлкĕрнĕши?" – мĕлтлетет пуçра шухăш. Чи кирли вара – вулаканăмăр пире шанни. Ырă хыпарсемпе кăмăла уçнисĕр пуçне пулăшу ыйтакан та пур. Патшалăх влаç органĕсемпе çыхăнса вĕсене пулăшма май килсен хамăр та тем пекех савăнатпăр. Чи кирли – вулакан пире шанать, влаç вара хаçатпа канашлать, эпир тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшать. Çапла пĕрпĕрне ăнланса, алла аллăн тытăнса ĕçлесен ăнăçу пулатех.

Уяв ячĕпе сире, хаклă вулаканăмăрсем! Çĕнĕ çул çĕнĕ ĕмĕтсемпе, ĕçсемпе пуянлантăр. Палăртни вара яланах пурнăçлантăр!

ТАВ ТĂВАТПĂР

# Пĕрлех пуласчĕ

Вĕçленсе пыракан Çĕлен çулне пĕтĕмлетме вăхăт çитрĕ. Редакцие куллен тенĕ пекех сирĕнтен çыру килет, вулаканăмăрсем. «Чăваш хĕрарăмне» юратнине, çулсерен çырăнса илнине, ăна чăтăмсăррăн кĕтнине пĕлтеретĕр эсир. Тепĕр чухне сĕнӳ-канаш та ыйтатăр. Вырăнти лару-тăрупа паллаштаратăр. Туслăх çулсерен çирĕпленсе пыни, çĕнĕ юлташ тупăнни пире çав тери савăнтарать.

Кăçал пирĕнпе çыхăну тытнă хастар авторсене ят-хушаматран палăртса тав тăватпăр. Иван Тенюшев, Юхма Мишши, Николай Карай, Роза Петрова-Ахтимирова, Левтина Марье, Лидия Сарине, Нина Пăрчăкăн, Зоя Сывлăмпи, Вячеслав Михайлов, Людмила Сорокина /Пурлушкина/, Николай Теветкел, Любовь Лĕпĕшпи, Валентина Христофорова, Маргарита Прокопьева, Светлана Асамат, Шевкен Гришши, Анатолий Юман, Николай Ершов, Леонид Маяксем, Маргарита Алигер, Геннадий Мальцев, Валем Ахун, Геннадий Юмарт, Валентина Тарават, Лидия Ковалюк-Антипова, Микул Пулар, Борис Борисов, Галина Кĕмĕл, Светлана Çутă, Венера Çалтăр, Елена Хĕвелпи, Николай Кириллов хăйсен çĕнĕ сăвăпоэмипе, калав-повеçĕпе паллаштарчĕç.

Аякри тăванăмăрсен пурнăçĕ çинчен Ирина Кузьмина /Тутарстан/, Валентина Тарават /Чĕмпĕр облаçĕ/, Анна Никонорова /Тутарстан/, Зоя Васильева /Кемĕр облаçĕ/, Алена Жарова /Краснодар крайĕ/ пĕлтерсе тăчĕç.

Александр Вишневский /Шупашкар хули/ юрату хайлавĕсем, Анатолий Максимов /Пукаш/ /Сĕнтĕрвăрри районĕ/ шӳтлĕ те кăсăклă путишсем çырса тăчĕç. Владимир Платоновпа /Шупашкар районĕ/ Николай Краснован /Йĕпреç районĕ/ сăмах касмăшĕсем тăтăш пичетленчĕç.

Яланхи авторсем Владимир Егоров /Элĕк районĕ/, Николай Михайлов /Сухаллă Микулай/, Роза Волкова /Кĕрхи/ /Вăрмар районĕ/, Георгий Тусли /Красноармейски районĕ/, Регина Чернова /Шупашкар районĕ/, Надежда Васильева /Кудряшова/, Геннадий Кириллов, Константин Портнов, Ольга Павлова, Кристина Александрова, Елена Николаева, Елена Арланова, Майя Стороненко, Ăсан Уçăпĕ, Тамара Верендеева /Шупашкар хули/, Галина Зотова /Хĕрлĕ Чутай районĕ/ çыхăнăва татмарĕç.

Çавнашкалах Оксана Ястребова /Тăвай районĕ/, Валентина Кириллова /Елчĕк районĕ/, В.Степанова /Красноармейски районĕ/, Геронтий Никифоров, Александр Мокшин, Александр Димитриев /Шупашкар хули/, Геннадий Павлов /Çĕрпӳ районĕ/, Федосия Григорьева /Муркаш районĕ/, Лидия Федорова /Канаш районĕ/, Фаина Лазарева /Элĕк районĕ/, Герман Ларшников /Шăмăршă районĕ/, Нина Степанова /Йĕпреç районĕ/, Елена Никитина /Муркаш районĕ/, З.Суркова, Николай Платонов, Ирина Иванова, Ксения Михайлова, Нина Антонова /Шупашкар районĕ/, Зоя Илларионова /Вăрмар районĕ/, Ольга Николаева /Самар облаçĕ/ тата ыттисем çыхăну йĕркелерĕç. Петр Сидоров спорт хыпарĕсемпе паллаштарчĕ.

Эпир пĕр йышра пулнипе вăйлă. Пирĕн хăват ан иксĕлтĕрччĕ. Яланах пĕрле пуласчĕ!

# Ĕрĕхсе килет Лаша çулĕ, шуса иртсе каять Çĕлен!

**СОЦИАЛЛĂ ПУРНĂÇПА ЭКОНОМИКА.** «Республикăри экономика аталанăвне куçа савăнтаракан цифрăсем мар, халăхăн ытлă-çитлĕхĕ, вăл патшалăх тата муниципалитет ĕçĕпе кăмăллă пулни, обществăпа политика çирĕплĕхĕ хак параççĕ», – çапла вуланăччĕ ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура. Çавăнпа, хаклă вулаканăмăрсем, эпир те цифрăпа сахалтарах усă курма тăрăшрăмăр.

Республикăри вăтам шалу 2013 çулта 20 пин тенке яхăн çитни пирки пĕлтерет статистика, çакă 2010 çулхинчен 1,5 хут пысăкрах. Пурăнмалли чи пĕчĕк укçа виçи – уйăхне 6226 тенкĕ. Чăваш Ен халăха ĕçпе тивĕçтерессипе те лайăх кăтартусем тума пултарчĕ.

2013 çул ял хуçалăхĕшĕн йывăр çул пулчĕ. Çуллахи типĕ çанталăка пула пĕтĕмĕшле 36,5 пин гектар лаптăк çинчи калча хăрса типрĕ, вырма вăхăтĕнче пуçланнă çумăрсем вара палăртнă тухăçа туллин пухса кĕртме май паман. Кăçал ял хуçалăхне патшалăх панă пулăшăвăн калăпăшĕ 2,5 миллиард тенкĕпе танлашнă. Чăваш Ен ку тĕлĕшпе Раççейри чи лайăх регионсен йышне кĕнĕ. Килти хушма хуçалăх тытакан кашни виççĕмĕш çемье /37%/, çав шутра çемьесен 20% иккĕмĕш хут, çăмăллăхлă кредитпа усă курнă. Ĕçе пуçăнакан 97 фермер тата выльăх-чĕрлĕх ферми тытакан 10 çемье ятарлă программăпа килĕшӳллĕн 2012-2013 çулсенче пурĕ 164 миллион тенкĕлĕх пулăшу илнĕ.

Мĕн пур тытăмри хуçалăхсенче пурĕ 411 пин тонна тĕш тырă пухса кĕртнĕ, çакă пĕлтĕрхинчен сахал мар. Чăваш Ен çĕр улми лаптăкĕн калăпăшне ӳстерекен регионсенчен пĕри шутланать.

Ял çыннин укçа-тенкĕ тĕп çăл куçĕ – сĕт туса илесси тата сутасси. Пĕр ĕнерен çулталăкне 5 пин килограмран кая мар сĕт сумалла – вĕсен умне çакăн пек тĕллев лартнă. Палăртнине пурнăçламашкăн майсем çителĕклĕ пулнине палăртать ЧР Ял хуçалăх министерстви: апат-çимĕçĕ те, выльăх ăрачĕ те пур. Республикăри хăш-пĕр хуçалăхра 9 уйăхра 5000 ытла килограмм /пĕр ĕнерен/ суса илекенсем – ыттисемшĕн те тĕслĕх.

Республикăра кайăк-кĕшĕк тата сысна ĕрчетесси пысăк хăватпа пырать. Кайăк-кĕшĕк фабрикисене çĕнетнĕ май аш-какай туса илессине 20 пин тонна ытла ӳстерме май панă. Асăннă проект пирĕн республикăра хута кайнăранпа агропромышленноç секторне 44 миллиард тенкĕ хывнă, вăл шутра выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк тытмалли 157 объект хăпартнă тата реконструкциленĕ.

Çивĕч ыйтусенчен пĕри – пушă выртакан çĕрсем. Федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен йышĕнче пирĕн республика çĕрпе тухăçлă усă курассипе иккĕмĕш вырăн йышăнать пулин те паянхи лару-тăру никама та тивĕçтермест. Явапсăр хуçасем тĕлĕшĕпе ӳлĕмрен çирĕпрех мерăсем йышăнĕç: çĕрпе кирлĕ пек усă курманшăн вĕсенчен налук ытларах шыраса илĕç.

Экономика ӳсĕмĕн локомотивĕ – республикăн строительство отраслĕ. Çĕнĕ объектсем çĕклесси, халь ĕçлекен производствăсене çĕнетесси, энерги перекетлекен строительство материалĕсем, çĕнĕ технологисене хута ярасси лайăх шайра пулса пыраççĕ. Кăçал республикăра 86 пин тăваткал метр ытла пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕ хута кайнă. 1000 çын пуçне хута яракан пурăнмалли çурт-йĕр кăтартăвĕ енĕпе Чăваш Ен федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен йышĕнче виçĕ çул ĕнтĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать.

**ВĔРЕНӲ.** Ачасем – çĕр-шыв пуласлăхĕ, çавăнпа та вĕсене тивĕçлĕ условисенче воспитани тата пĕлӳ илме майсем туса парасси – тĕп вырăнта. Шкул умĕнхи ӳсĕмри ачасен 72,6% /юпан 1-мĕшĕ тĕлне/ садике çӳреççĕ. 3 çултан иртнĕ ачасен черетне пĕтерме шантарнăччĕ, паян çак ыйту татăлнă. Çулталăк çурăчченхисене 2015 çулта вырăнсемпе тивĕçтерĕç.

Шкул умĕнхи воспитани паракан учрежденисен пӳлĕмĕсемпе тухăçлă усă курнипе, тĕпрен юсаса çĕнетнипе кăçал 3337 вырăн туса пама май килнĕ. Пурĕ вара 6000-е яхăн вырăн уçăлнă. Республика 11 çĕнĕ садик хута яма палăртнăччĕ. Елчĕк, Комсомольски районĕсенче ку тĕлĕшпе ĕçсене вăхăтра вĕçленĕ. Çĕмĕрле, Куславкка хулисенче графикран юлса хута янă. Подрядчик айăпне пула тата темиçе районта ĕçе вăхăтра пурнăçлайман.

Кăçал Чăваш Енри шкул вĕренĕвĕн тытăмĕ федераци шайĕнче пысăк хака тивĕçрĕ. Пирĕн 12 шкул Раççейри чи лайăх 500 шкул йышне лекрĕ, Шупашкарти 3-мĕш лицей çĕр-шыври 25 шкул шутне кĕчĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тытăма çĕнетме юлашки 3 çулта хушма майпа 5 миллиард тенке яхăн укçа-тенкĕ хывнă. Республикăри шкулсен иккĕ виççĕмĕш пайĕ тĕпрен юсав ирттерме бюджетран укçа илнĕ. Апатланăва тĕпрен улăштарас ĕç кăçал та тухăçлă иртнĕ, учрежденисен 72% столовăйĕ çĕнĕ йышши хатĕрпе усă курать, вĕренекенсен 96% шкулта апатланать. 2013-2014 çулсенчи вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен республикăри пур хулари тата хăш-пĕр ялти шкулсенче апатланушăн карточкăпа тӳлемелли тытăм ĕçе кĕмелле, ку тĕлĕшпе Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле хулисенчи чылай шкул çĕнĕлĕхе ăнăçлă вăя кĕртнĕ ĕнтĕ. Ирхи апат хакĕ вăтамран хулара – 16-20, кăнтăрлахи 40 тенкĕпе танлашать.

Кăçал Вăрмар тата Патăрьел районĕсенче çĕнĕ шкулсем уçăлчĕç, Комсомольски, Канаш районĕсенчи тепĕр икĕ шкулта реконструкци ирттернĕ. Шупашкар районĕнчи Янăшра çĕнĕ шкул строительстви пырать.

Юлашки 3 çулта республикăри шкулсен кивĕ йышши автобусĕсене тĕпрен çĕнетнĕ. Хальхи вăхăтра вĕренекенсене пурĕ 301 автобус турттарать, вĕсене пурне те ГЛОНАСС йышши спутник тытăмĕпе тивĕçтернĕ. Кăçал пĕрремĕш хут дизель топливăпа ĕçлекен автобуссем туяннă, вĕсем, ПАЗикпа танлаштарсан, 3 хут сахалрах топливо «çăтаççĕ».

Шкулти çамрăк специалистсене мĕнле хавхалантарассине кашни муниципалитет хăй татса парать, кунсăр пуçне çамрăк учительсен пурăнмалли çурт-йĕр условисене лайăхлатмалли программăпа усă курма май пур. Çапах та вĕсен йышĕ пурĕ те 4% кăна-ха, шкул умĕнхи вĕренӳ тытăмĕнче те кадр ыйтăвĕ çивĕч.

Ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче тăван чĕлхен пĕлтерĕшне, сумĕпе хисепне ӳстерес тĕллевпе «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акци пĕрремĕш хут иртрĕ. Унта 2300 яхăн çын тĕрĕс çырма пултарассине тĕрĕслерĕ.

**СПОРТ.** Паян çамрăксенчен ытларахăшĕ сывă пурнăç йĕркине суйласа илет. Кашни район центрĕнчех физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайни те витĕм кӳретех. Юлашки çулсенче Чăваш Енти спорта аталантармашкăн 5 миллиард ытла укçа хывнă, 50 ытла спорт объектне юсаса çĕнетнĕ.

Халăх йышлăн хутшăнакан акцисем вăй илсе пыраççĕ, вĕсем çынсене лайăх кăмăл-туйăм парнелеççĕ. Шупашкар хулин кунĕнче çăлтăрпа пĕрле зарядкăна 28 пин çын тăчĕ. Çапла майпа эпир Европа Рекорчĕсен кĕнекине кĕме тивĕçрĕмĕр.

Республикăн спорт çитĕнĕвĕсене Раççей тата тĕнче шайĕнче хакланă: Чăваш Ен 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе Европăн командăсен чемпионатне, 2016 тата 2018 çулсенче хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокне ирттерме ирĕк илнĕ. Кăçал çурла уйăхĕнче Шупашкар парашют спорчĕн Тĕнче кубокĕшĕн Европа чемпионачĕ йĕркелеме тивĕçрĕ. Çакă тата ытти чылай çитĕнĕве кура Раççей Правительстви Чăваш Ене «Раççей регионĕ» номинацире физкультурăпа спорт енĕпе наци премийĕпе чысларĕ. Пирĕн республика Раççей Федерацийĕнче «спортпа туслă чи лайăх регион» ята тивĕçрĕ.

Тăван чĕлхе сумне ӳстерекен спорт уявĕсем те массăллă иртрĕç кăçал. Вĕсене «Хыпар» Издательство çурчĕн пуçарăвĕпе килĕшӳллĕн йĕркелерĕç. Ака уйăхĕнче чăваш халăхĕн мăнаçлă икĕ Улăпĕ: Иван Яковлев çуралнăранпа – 165 çул, Николай Никольский çуралнăранпа 135 çул çитнине халалласа Кăнна Кушки – Шупашкар – Купăрля маршрутпа çăмăл атлетика чупăвĕ иртрĕ. Раштавра «Хыпар» хаçат парнисемшĕн кире пуканĕ çĕклессипе иртнĕ Пĕтĕм Раççейри XXX турнира çĕршывăн 8 регионĕнчен килнĕ 300 ытла спортсмен хутшăнчĕ. Турнир историйĕнче ку – рекорд.

Çулталăк вĕçĕ Шупашкара Олимп çулĕн эстафети çитнипе ĕмĕрлĕхе палăрса юлчĕ.

**СЫВЛĂХ.** Республикăри онкологи клиника диспансерĕнче çĕнĕ технологисемпе усă курма пуçланă. Хырăмлăхри, пыршăлăхри, хĕрарăмăн ар органĕнчи пысăк виçеллĕ усал шыçça касса илсен унăн клеткисем организмра юлас хăрушлăх пур. Халĕ операци вăхăтĕнчех вĕсенчен хăтăлма пулать. Хырăмлăха хими препарачĕн вĕри хутăшĕпе çăваççĕ. 43 градуслă шĕвек усал шыçă клеткисене вĕлерет, çав вăхăтрах сывă тĕртĕмсене шар кăтартмасть. Пациентăн çакăн хыççăн хими терапийĕн курсĕ витĕр тухмалли кăна юлать.

Республикăри кардиологи диспансерĕнче Томскри медицина университечĕн чĕрепе юн тымарĕсен хирурги пайĕн пуçлăхĕ Александр Оферкин ăсталăх класĕ ирттернĕ. Çĕнĕ йышши компьютер оборудованийĕпе усă курса тӳрех 2 операци тунă вăл. Тухтăр алăри тата урари юн тымарĕсем урлă чĕре патне ятарлă инструментсем чикнĕ. Пациент 15 çул аритмипе аптăранă. Çакăн хыççăн чĕре ĕçĕ йĕркеленнĕ. Чăваш кардиохирургĕсем те кăткăс операцисем тăваççĕ. Çак сыватмăша хальхи йышши технологипе тивĕçтерсех тăраççĕ.

Республикăри ача çуратмалли çуртсем кăкăр çитерессине сарас тĕллевпе йĕркеленĕ Пĕтĕм тĕнчери эрнелĕхе хутшăнчĕç.

Республикăри эндокринологи диспансерĕнче остеопороз профилактикин центрĕ уçăлчĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ – диагностика ирттересси, сиплесси, консультаци парасси кăна мар, регионта асăннă чирпе кĕрешессине йĕркелесе тăрасси. Профилактика ĕçĕсемпе килĕшӳллĕн специалистсем районсене тухса çӳреççĕ, халăха тĕрĕслеççĕ. Чирпе вăрах аптăракансен сывлăхне тĕплĕнрех диспансерта тĕпчеççĕ. Пациента ятарлă регистра кĕртеççĕ. Вăл нушаланакансене 1-3 çул сăнама май парĕ.

**КУЛЬТУРА.** Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш музыкин эрни иртрĕ. Проект авторĕ – театрăн пултарулăх ертӳçи, тĕп дирижерĕ – Ольга Нестерова. Çак театрăн репертуарне чăваш халăхĕн пурнăçне кăтартакан 10 опера, 2 оперетта, 16 музыка камичĕ, 9 балет кĕнĕ. Нумайăшне темиçе хут сцена çине кăларнă. «Шывармань» оперăпа «Сарпике» балета республика Пуçлăхĕн грантне пулăшнипе çĕнĕрен хатĕрленĕ.

Раççей Хĕрарăмсен канашĕн председателĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Екатерина Лахова республикăн ертӳлĕхĕпе пĕрле Шупашкар хулин 1-мĕш клиника перинаталь центрĕ çывăхĕнче «Юрату кĕл чечекĕ» скульптурăна уçма хутшăнчĕ. Бронзăран шăратса тунăскер 200 килограмм таять.

Республикăра Пĕтĕм тĕнчери VI кинофестиваль иртрĕ. Тӳлевсĕр фильмсене Шупашкарта кăна мар, Çĕрпӳре те, Сĕнтĕрвăрринче те кăтартрĕç. Кино уявĕ Александр Прошкинăн сакăр фильмĕпе, Игорь Таланкинăн ĕçĕсен çĕрлехи сеансĕсемпе, «Сахал йышлă халăхсен фильмĕсем», «Фестивальсен фестивалĕ» ятарлă программисемпе, ачасене илĕртекен мультфильмсемпе асра юлчĕ. Конкурсра 12 ĕç хакларĕç. Тĕрлĕ жанрлă – фэнтези, социаллă драма, хура камит – фильмсем илсе килчĕç пирĕн республикăна. Вĕсене вырăс, финн, латыш режиссерĕсем ӳкернĕ.

Шупашкарта федерацин Атăлçи округĕнчи ачасен пултарулăхĕн «Çăлтăрлă сехет» фестивалĕн гала-концерчĕ иртрĕ. «Ачалăх çăлтăрĕ» конкурс фестивальне 180 ытла тĕпренчĕк хутшăннă. Сăмах май, финала тухассишĕн 1400 ача тупăшнă. Фестивале ача çурчĕсенче, социаллă адаптаци центрĕсенче çитĕнекенсене пулăшакан проектпа килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.

К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕсем Пĕтĕм тĕнчери «Коляда – Plays» хальхи драматурги фестивальне хутшăнчĕç. «Шанель «пике» спектаклĕпе Гран-прие тивĕçрĕç.

Шупашкарта халăхсен хушшинчи «Пĕрешкел пулмасан та юрать» хăйне евĕрлĕ I фестиваль иртрĕ. Унта Раççейри тата чикĕ леш енчи 13 театр труппи хутшăнчĕ. Вĕсем сусăр ачасем валли спектакльсем кăтартрĕç.

**ÇУТ ÇАНТАЛĂК.** Пĕтĕм Раççейри çут çанталăкăн чĕрĕ палăкĕсен йышне Муркаш районĕнчи Тренькка ялĕнчен икĕ çухрăмри Сăнав вăрманлăхĕн Ильинка уйрăмĕн 9-мĕш кварталти ватă юмана кĕртрĕç. Вăл – 362 çулта. Унăн диаметрĕ – 182, тавраш 570 сантиметрпа танлашать. 26 метр таран çитĕннĕскерĕн тăррине çиçĕм тивнĕ, çакăн хыççăн 24 метр юлнă.

Пăрачкав районĕнчи Напольное ялĕнче хĕле хирĕç садсем чечеке ларнă. Шăлан та, хăмла çырли те çеçке çурнă. Биологсем ăнлантарнă тăрăх – çуркуннехи улшăнуллă çанталăка, çуллахи шăрăха пула пур чечек те вăхăтра çурăлайман. Кĕркуннехи ăшă тата нӳрĕк вара ырă витĕм кӳнĕ.

Атăл леш енчи вăрмансене йĕркене кĕртес ĕç малалла пырать. Кĕркунне Пĕтĕм Раççейри «Пурăн, вăрман» акцие хутшăнакансем – 300 ытла çын – çунса кĕлленнĕ лаптăксенче ĕçе пуçăннă. Студентсем, вĕрентекенсем, «ЭКА» юхăм членĕсем, ЧР Çут çанталăк министерствин ĕçченĕсем 5 гектар çĕр çинче 30 ытла чăрăш лартса хăварнă.

Чăваш Республикинче хăмăр упа йышне унăн малти ури йĕрĕ тăрăх шутланă. Çак чĕр чун тăватă районта /Сăрçи тата Атăл леш енчи вăрманлăхсенче/ пурăнать. Пирĕн тăрăхра 14 упа хăтлăх тупнă. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан йыш улшăнман.



ЧУН КИЛЕНĔÇĔ

# Юртса пырать юлан ут



Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьелти лаша усракан Павловсен килĕ тĕлне хашлаттарса чупса çитрĕм, шала кĕрсе сывлăш çавăрса илесшĕнччĕ – пулмарĕ, хуçисем алăка питĕрсе хăварнă. «Çемье пуçне витесем патĕнче шыра, выльăх-чĕрлĕх патне тухса кайрĕ вăл», – терĕç кӳршисем. Павел Павлов лашапа тихана утă çитернине курах кайрăм. Выльăх пăхма ӳркенмест ку çемье. Пĕр вăхăт 4 лаша таран тытнă вĕсем.

«Атте Андрей Матвеевич конюхра ĕçлетчĕ. Эпĕ лаша çинчех çитĕннĕ. Выртмана çӳренĕ. Тепĕр чухне çĕрле те выльăх шăварма каяттăм. Ывăнса çитсен лаша утланса пынă чухнех çывăрса кайни те пулнă», – хăйĕнпе паллаштарать кил хуçи. 6 ачине те выльăха юратма вĕрентнĕ Павловсем. 2 ĕне, 2 пăру, 1 вăкăр, сыснасем усрать çемье. 7 уйăхри тиха картишĕнче чупса çӳренине сăнама кăмăллă. Ача пекех пĕр вырăнта тăрасшăн мар вăл. Вăйăа чĕннĕн ман ума пырса та тăпăртатрĕ.

Халĕ çынсем канлĕ пурăнасшăн – чылайăшĕ мотоблок туянма тăрăшать. Ăна ирĕн-каçăн çитермелле те, шăвармалла та мар. Павловсем вара пĕчĕкренех ĕçре пиçĕхнĕ. Çăвĕпех утă-улăм хатĕрлеççĕ вĕсем. Выльăх-чĕрлĕх пăхасси те ял çыннисемшĕн – чун киленĕçĕ. «Хуçалăхра пĕр лаша кирлех. Мĕнле-ха унсăр? Вăл пире суха тума, сӳрелеме, çĕр улми лартма, тислĕк тăкма, утă-улăм турттарма... пулăшать. Хамăр килте кăна мар, çын патĕнче те ĕç тупăнать ун валли», – урхамахне ачашлать Павел Андреевич.

Лаша сĕлĕ çиесшĕн. Анчах юлашки вăхăтра хуçалăхсенче лартасшăнах мар ăна. Çавăнпа сĕлĕ сутакан та çукпа пĕрех. Ун вырăнне выльăха урпа авăртса пама тивни çинчен каларĕ арçын. Унсăр пуçне ута сахăр катăкĕпе астарма вĕрентнĕ.

«Лаша хăйĕнпе кăмăллă калаçнине пĕлет. Сăмаха хăлхине тăратсах итлет. Сасса хăпартсан кӳреннине палăртса çиййĕнчех çаврăнса тăрать», – çирĕплетет Павел Андреевич. Арăмĕпе упăшки юрлама, ташлама юратаççĕ. Хуçисем выльăха юрă-кĕвĕ итлеме те хăнăхтарнă. Витере ĕçленĕ вăхăтра пĕр юрă хыççăн теприне шăрантараççĕ вĕсем. Уявсенче Павловсем лаша кӳлсе тухаççĕ. Ун чухне юрă çеммипе юртса пырать юлан ут.

«Пĕрре уявра юлташпа иксĕмĕр рыцарь çипуçне тăхăннăччĕ. Турнир йĕркелерĕмĕр. Пирĕн хĕçсем хĕм сапрĕç анчах», – аса илет Павел Павлов. Çăварнире те халăх çуна çине ларасшăн. Ун чухне те кăмăл туличчен юрлать чăваш.

Çулла Павловсен кӳрши Галина Михайлова ирех тăрса çаран еннелле утнă. Хайхи кĕрсе хăмланине курах кайнă вăл. Каялла таврăнса хуçисене вăратнă хĕрарăм. Ырă хыпар, паллах, савăнтарнă вĕсене. «Кайран арăмĕпе упăшки лашапа тихана ыталаса чуп тунине асăрхарăм», – калаçăва хутшăнать Галина Григорьевна.

Павел Андреевич каланă тăрăх – ял ĕнисене кĕтĕве лашапа хăвалама та çăмăл. Унăн урхамахĕ çул-йĕр правилисене те пĕлет. Машинăран хăрамасть. Хуçине киле тĕрĕс-тĕкел çитерет.

«Çамрăк чухне темле харсăр лашана та алла илнĕ. Чупса пырса утланаттăм. Пĕррехинче ут юр хӳнĕ сукмакпа каясшăн пулмарĕ. Тапса сикрĕ те эпĕ карта çине çакланса юлтăм. Пăтаран вĕçерĕнме çынсем пулăшрĕç», – аса илет арçын.

Çак лашана хуçи киле пырса панă ăна. «Усраса пар, унпа пĕрле усă курăпăр», – тенĕ. Павел Павлов выльăха кӳлме вĕрентнĕ. «Икĕ хуçалăх пĕр лаша усрани йĕркеллĕ мар, пурăна киле тавлашу сиксе тухма пултарĕ», – çакнашкал пĕтĕмлетӳ тунă арăмĕпе упăшки. Çавăнпах килти пулăшуçăшăн укçа панă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

МАН КИЛЕС



**Марина ТУМАЛАНОВА:**

Ирсерен ĕçе килес килет. Хаçат тухмассерен вулакансем редакцие шăнкăравлаççĕ. Статьясене вĕсем хак пани нимрен пĕлтерĕшлĕ. Хавхалантарнăшăн пурне те пысăк тав.

Çула тухни киленӳ кӳрет. Кирек ăçта кайсан та ют çын килнине тӳрех асăрхать ял çынни. Мĕн сăлтавпа çӳренине пĕлсен çынсем журналист тавра пуçтăранаççĕ. Вĕсен хушшинче «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата пичетленме пуçланăранпа çырăнса илекенсем те пур. Унсăр пуçне çул çӳрени ял тăрăхĕсенче çĕнĕ юлташсем тупма пулăшать.

Çырăнтару тапхăрĕнче почтальонпа пĕрле пĕр организацирен теприне хутлани те манăçман. Пирĕн, паллах, хамăр хаçатпа ытларах çынна паллаштарас килет. Муркаш районĕнчи пĕр шкула тăватă кĕрсе тухрăм, почтальон вара çичĕ хут кайса килме ӳркенмерĕ. Вĕрентекенсем мĕншĕн хаçат-журнал çырăнасшăнах мар-ши? Ача садĕнче пачах урăх ӳкерчĕк: пурте тенĕ пекех «Чăваш хĕрарăмĕпе» туслашаççĕ.

Кашни тĕл пулу асра юлать. Канаш районĕнчи Карăклăри Петровсен пахчинчи исĕм çырли çупкисем халĕ те куç умĕнче. Шупашкар районĕнчи Мăн Маркари Пылтовсен путене фермине çитсе курма май килчĕ. Уннчен çак кайăккĕшĕке мĕнле усранине пĕлмен. Шупашкар районĕнчи Вăрăмтури хĕреслĕ Глаша мĕнле пурăнатьши тата? Çынсем çаплипех Мочаловсем патне ашак курма пыраççĕ-ши?..

Пĕрре Канаш вокзалĕнче манпа, палламан çынпа, хусах калаçу пуçарчĕ. Авланма шухăш тытнине пытармарĕ. Пĕчçен пурнăç йăлăхтарсах çитернĕ ăна. Шел, Канаш район каччине никампа та паллаштармарăм – манăн пур юлташ та мăшăрлă. Эх, çитес çул авлантарса пĕтересчĕ ялти хусахсене!

Юсанмалли 2-мĕш колонири хĕр-хĕрарăм пурнăçĕ ирĕкре ырă енне улшăнасса шанас килет. Улатăра васкăнă май çул тăршшĕпех инкеке лекнисен шăпи шухăшлаттарнăччĕ. Тем тесен те амăшĕн тĕрмере ларма вăхăт çук, унăн ачи-пăчине çитĕнтермелле.

Уяв ячĕпе, туссем! Çывхарса килекен Çĕнĕ çулта пурне те ăнăçтăр. Сывлăхлă пулăр!



ЮМАХ ТĔНЧИ

# Хĕл Мучине сасăран паллаççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

«Малтан Çĕнĕ çул вăхăтĕнче 3-шер, 4-шар смена ĕçлеттĕмĕр. Сценарие пионер вожатăйĕсемпе пĕрле хатĕрлеттĕмĕр. Ун чухне пăхмасăр каламалли нумайччĕ», – тет Геннадий Сергеевич.



Таврана каç сĕмĕ çапсан пĕр ялтан теприне васкаnă чухне кутамккана хыпашласа пăхакансем те тупăннă. Чим, вăрă-хурах тапăнман-и ăна? Çук, никам та шар кăтартман. Иртен-çӳренĕн пылак çимĕç тутанса пăхас килнĕ. Ырă Хĕл Мучи никама та кӳрентермест. Кутамкка тĕпĕнче канфет-пĕремĕк пурах унăн.

«Çамрăккисем патне турттă-натăн...» – çулсем иртнĕçемĕн кăшт ӳпкелешсе те илнĕ мăшăрĕ Фаина Николаевна. Çук, ятлаçман вăл. Хĕрарăмăн упăшкипе юнашар ытларах пулас килнĕ ахăр.

Уявра Хĕл Мучин хăйне вăрах кĕттерме юрамасть. Унсăр чăрăш тавра пуçтăраннисене кичем. Кам выляттарĕ, юрлаттарĕ, ташлаттарĕ вĕсене? Геннадий Сергеевич сăмах шырамашкăн кӳрше каçма хăнăхман. Кирлех пулсан хăйĕн сăввисене те вуласа парать. Мĕнех, унăн пултарулăхне хак патăр ял-йыш.

«Шкулти елкăна тӳрех каларса пăрахма шел вĕт. Эпир ăна урама тухса лартаттăмăр. Çапла майпа уява малалла тăсаттăмăр», – ăнлантарать Геннадий Сорокин.

Шкулта лайăх вĕренекенсене кĕнекепе чысласçĕ. Хĕл Мучине çавăрнăнă директортан, сăмахран, парне илме мĕнешкел кăмăллă. «Çĕр-çĕр мар, пин-пин кĕнеке панă ачасене», – каласа кăтартать вăл. Чăнах, вĕренекеншĕн çакăнтан кирлĕрех, усăллăрах парне пур-и? «Ачасене юрататăп, учительсене хисеплетĕп, çавăнпа Хĕл Мучи тумне тăхăнса вĕсене савăнтарас килет», – чунне уçать педагог. Çитменнине, кашнин кăмăлне никамран лайăх пĕлет вăл. Апла тăк пурне те ăшă сăмахпа хавхалантарма пултарать. Уявра çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

### Килте те кĕтеççĕ

Килте Хĕл Мучи хуçаланни – ырă пулăм. Ывăлĕпе хĕрне те хĕрлĕ кĕрĕкпе калпак тăхăнса саламлассине йăлана кĕртнĕ Геннадий Сергеевич. «Парнене мăшăрпа пĕрле лавккаран туянаттăмăр. Хаклине шыраман. Ачасене пĕчĕкренех парнене хаклама, уншăн тав тума вĕрентнĕ», – çирĕплет ашшĕ. Чи çывăх çынни юмахри сăнара çаврăннине ăнкарнă, паллах, вĕсем. Халĕ мăнукĕсене хăнăхнă йĕркепе саламлать. «Сана сасăран палласа илтĕмĕр», – ыталаса илеççĕ вĕсем мана», – тет хаваслă Хĕл Мучи. Çакă пушшех çывăхлатать вĕсене.

Çитес çул Сорокинсен килне те «Чăваш хĕрарăмĕ» килсе тăрĕ. Хаçат вулаканĕсене лаша пекех ывăнмасăр ĕçлеме сунать Хĕл Мучи. Ӳркенменнисем малашне те ытлă-çитлĕ пурăнĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**



ХАСТАРЛĂХ

# Кучченеç кутамкки тулнăпа пĕрех

«Ман пата çынсем ĕçпе кăна мар, кăмăла уçма та шăнкăравлаççĕ. «Паян канмалли кун пултăр-ха», – тесе телефона сÿнтерсе те пăхатăп. Анчах... чăтаймастăп – 1-2 сехетренех ярса тытатăп ăна. Экран çутăлсанах темиçе СМС килсе çитет. Апла тăк телефон ĕçлемен вăхăтра та эпĕ такама кирлĕ пулнă», – пуçлать калаçăва ЧР салтак амăшĕсен комитечĕн ертÿçи Лариса Егорова. Эпĕ кашнинчех унăн ырă кăмăлĕпе çаврăнăçулăхĕнчен тĕлĕнетĕп. Инкеке лекнисем тÿрех ун патне тĕрев шыраса пыраççĕ. Вутçулăм алхаснине пула килсĕр-çуртсăр юлнисене те, нушаллă пурăнакансене те пулăшма май тупать вăл. Çавна май ыр кăмăллăх акцийĕсем йĕркелет. Лариса Ивановна пуçтарнă япаласем хăйсен çĕнĕ хуçине тупасси пĕрре те иккĕлентермест. Пĕррехинче вăл хăйĕн пушмакне те пĕр хĕрарăма тăхăнтартса янă. Чăнах, кашни çыншăн ыратать унăн чунĕ.

Салтак амăшĕсен комитечĕн ертÿçипе тĕл пулма васкани пирки ача-пăча хула 3-мĕш больницинчи Наталья Петрова тухтăра каласа кăтартрăм. «Хĕрĕмĕн пĕчĕкленнĕ япалисене пуçтарса хунăччĕ. Вĕсене Лариса Ивановна патне çитерсем», – терĕ сывлăх сыхлавçи. Çавăнпах хальхинче сумкăпа çитсе тухрăм Çĕрпÿ районĕнчи Патăрьеле.

Пурне те пулăшма хатĕр Лариса Егоровăна чиркÿсем, мăнастирсем укçа параççĕ. Унпа парне туянать вăл. Çавнашкалах грант çĕнсе илни ĕмĕт-тĕллеве пурнăçа кĕртме пулăшать ăна. Кăçал, тĕслĕхрен, общество организацине федераци, республика хыснисенчен укçа куçарса панă.

Салтак амăшĕсен комитечĕ çĕр-шыв сыхлавçисене Çĕнĕ çул, Раштав уявĕсемпе саламласшăн. Çавăнпах Лариса Егорова кăрлач уйăхĕн 5-мĕшĕнче çула тухма хатĕрленет. Хальлĕхе 15 салтак амăшне валли те билет туяннă. «Ыттисем те ман пата шăнкăравлаççĕ, вĕсем те çар чаçĕсене çитсе килесшĕн», – ăнлантарать ертÿçĕ. Каллех вокзала çул хывать Лариса Ивановна. Канăçсăр амăшĕсене хĕсметри ывăлĕсемпе курнăçтарасшăн хĕрарăм.

Вĕсене Смоленскри, Калининград облаçĕнчи, Псковри, Чулхулари çар чаçĕсенче кĕтеççĕ ĕнтĕ. Пушă алăпа çула тухмĕç салтак амăшĕсем. Парне кутамкки йывăрланнă. Ăна тултармашкăн вулакансенчен те пулăшу ыйтать Лариса Ивановна. Çĕр-шыв сыхлавçине кирлĕ япаласем парса яракана пуç тайса тав тăвĕ вăл. Ун урлă салам каласа яма май пур. Парнепе савăнтаракана салтаксем те ырăпа аса илĕç.

**Мария РОМАНСКАЯ.**



МАН КИЛЕС



**Алина ИЗМАН:**

Пĕрремĕш хут капăр чăрăш уявне курмашкăн анне аппапа иксĕмĕре Шуркассинчи кĕçĕн классен шкулне /Шупашкар районĕ/ илсе кайнăччĕ. Иксĕмĕр те ун чух шкул ÿсĕмне çитменччĕ-ха. «Ташламасан-юрламасан Хĕл Мучи канфетпа хăналамасть», – çапла каласа астарнă пулĕ анне. Вăл, купăс калаканскер, тăрăшсах такмаксем вĕрентрĕ пире. Ташлама унчченех пĕлнĕ-ха эпир. Уява парне хатĕрленĕ чăваш кĕпине тăхăнса кайрăмăр, çум çаккипе, ум çыххипе капăрлатнăччĕ ăна. Шкулта çын нумай пухăннă, вĕсен умне тухса тĕпĕртетме мĕнле вăтанман-ши? Çакăнтан халĕ те тĕлĕнетĕп. «Лапша-макарон çапла пĕçереççĕ...» – такмакласах сикрĕмĕр эпир. Кайран чылай вăхăт çынсем тĕл пулмассерен: «Хунямана тапса сиктерекенсем эсир-и-ха?» – тесе шахвăртатчĕç. Анне купăсне халĕ те аларан ямасть, чăваш кĕвви каласа 5 мăнукне ташлаттарать.



ЫЙТĂМ

# Хĕл Мучирен – парне

**Çак уявпа çыхăннă асамлăха аслисен те ĕненес килет.**

**Çĕнĕ çула пурте чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Ачасем вара вăрттăн ĕмĕчĕ пурнăçланасса шанса Хĕл Мучи патне çыру та шăрçалаççĕ. Анчах эпир, аслисем, Çĕнĕ çул парни шăпăрлансем патне мĕнле майпа çитнине пĕлетпĕр-çке. Юмах тĕнчинчен хăпман тĕпренчĕкĕсене тĕлĕнтерес тесе мĕн кăна шухăшласа кăлармасть пулĕ хăшĕ-пĕри. Сивĕтмĕшĕн шăнтмăшĕ Хĕл Мучин почта ещĕкĕ-мĕн: çырăва унта хурсан вăл кирлĕ çĕре хăвăртрах çитет-мĕн. Хаклă çав хута Юр кĕлеткерен парса яма шантаракан та пур... Хĕл Мучи парни ачасем патне мĕнле майпа çитет-ха? Ĕçлĕ çынсене хальхинче çак ыйтăва уçăмлатма ыйтрăмăр.**

**Зоя ЯКОВЛЕВА, Чăваш Ен наци телерадиокомпанийĕн режиссерĕ:**



– Ачасем ÿссе çитрĕç ĕнтĕ: асли – 28-та, кĕçĕнни – 23-ре. Кукамай та пулма ĕлкĕртĕм. Пĕчĕк чух, паллах, вĕсем те Çĕнĕ çула чăтăмсăр кĕтетчĕç. Пылак çимĕçрен татăк тăманран канфет ыйтман вĕсем. Иккĕшĕ ăмăртмалла çемçе тетте пухатчĕç, Хĕл Мучирен те çавнах ыйтнă. «Çырăва ун патне почтăпа ярăп», – тесе хут листине илсе каяттăм. Кĕтнĕ кун çитсен хĕрĕмсем парнене минтер е чăрăш айĕнче тупатчĕç.

**Владимир РОМАНОВ, ЧР ШĔМĕн ÇСХПИ управленийĕн пуçлăхĕ:**

– Кĕçĕнни, Рома, сас палли вĕренсенех çыру шăрçалама тытăнчĕ. Ăна вăл чăрăш айне хурать те ир пуласса кĕтет. Вăрансан тÿрех çырăва хунă вырăна кайса пăхать. Çĕрле Хĕл Мучи чÿречерен кĕрессе ĕненет Рома, çавăнпа та кирек епле çанталăкра та уçă форточкăпа çĕр каçатпăр. Чăрăш айне парне хума та Хĕл Мучи çавăнтанах кĕрет тесе шухăшлать ывăлăм.



**Петр НИКИФОРОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ:**



– Ачасем çыру çырнине ас тумастăп, çапах та парне кĕтнех. Хĕл Мучи киле пырсах хĕр пĕрчине – пукане, ывăла тетте машинăпа хавхалантаратчĕ. Тăвансемпе пĕрле пуçтарăнаттăмăр та уяв хаваслă иртетчĕ, ачасем те йышлăччĕ ун чух. Халĕ çав вăхăта тавăрса мăнукăмсене савăнтарас килет. Хамăр тăрăшсан Хĕл Мучи каллех пирĕн пата çитĕ-ха.

**Николай КАЗАКОВ, композитор, Чăваш патшалăх филармонийĕн директорĕ:**



– Çĕнĕ çула яланах тăван ялта, Тăвай районĕнчи Тăрмăшра, кĕтсе илетĕп. Аппан ывăлĕпе манăн хĕр – пĕр ÿсĕмрисем, çавна май иккĕшĕ пĕрле выляса ÿсрĕç. Уяв каçĕнче çулсеренех Хĕл Мучи хăнана килетчĕ, вĕсене парне паратчĕ. Ачасем ĕмĕтленнĕ теттине алла илсен епле савăнатчĕç. «Кăçал та Хĕл Мучине кураймасăрах юлтăн! Мĕнле шел... Эсĕ тула тухнă хушăра килсе кайрĕ вăл пирĕн пата», – хыпăнса каласа паратчĕç пĕчĕкскерсем. Çавăн пекех çырмара çунашкапа ярăнатпăр эпир. Ÿлĕмрен те çак йăлана пăрахăçламăпăр.

**Елена ЧЕКУШКИНА, чĕлхеçĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ вĕрентÿçи:**



– Ачасем садике çÿренĕ чухнех Хĕл Мучин вăрттăнлăхне уçрĕç – ун вырăнне капăр чăрăш уявĕнче воспитательница тумланса тухнине ăнланчĕç. Çавăнтанпа улталас тесе тăрăшман. Ачасем айванрах чухне: «Ку Хĕл Мучирен», – тесе парне хатĕрлеттĕм, вĕсем мĕн кĕтнине маларах пĕлеттĕм те. Ăна кам туяннине тавçăрсан тек суйма пăрахрăм.

**Алина ИЗМАН ыйтса пĕлнĕ.**



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### «Хĕл Мучи» салат

**1 кишĕр, 100 грамм сыр, 2 çăмарта, 200 грамм краб патакĕ, пĕçернĕ 1 стакан рис, 1 пылак пăрăç, укроп, пĕрчĕллĕ хура пăрăç, тăвар, майонез кирлĕ.**

Кишĕре вĕтĕ терка витĕр кăлармалла. Пĕçернĕ çăмарта саррипе шуррине уйăрмалла. Пĕр çăмарта шуррине салата капăрлатма хăвармалла, ыттине теркăламалла. Çавнашкалах краб патакĕн хĕрлĕ пайне касса илмелле, шуррине вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене пăтратмалла, вĕтетнĕ укроп хушмалла. Рисăн пĕр пайне апата илемлетмешкĕн хăварма ан манăр. Салата ăшăх турилккене Хĕл Мучи кĕлетки майлă хумалла. Кĕрĕкпе калпакне краб патакĕн хĕрлĕ пайĕпе ăсталамалла. Кĕрĕк çăмне – риспа, сухалне çăмарта шуррипе тумалла. Хура пăрăç – куç, пылак пăрăç çаврипа сăмса тума кирлĕ пулĕ.

### «Юр кĕлетке»

**200 грамм краб патакĕ, 1 банка куккурус, 4-5 çăмарта, майонез кирлĕ. Илемлетме симĕс сухан, пĕрчĕллĕ хура пăрăç, хĕрлĕ пăрăç хатĕрлемелле.**

Вĕттĕн туранă краб патакне куккурууспа, теркăланă çăмартапа пăтратмалла. Çак хутăшран 3 çаврашка тумалла, кашнине теркăланă çăмарта шуррипе йăвалаламалла. Вĕсемпе юр кĕлетке ăсталамалла. Хĕрлĕ пăрăçран – шĕлепке, симĕс суханран – шарф, хура пăрăçран куçпа тӳме тумалла. Юр кĕлетке аллине ăсталама укроп кирлĕ. Ун йĕри-тавра салатран çаврашкасем туса хума пулать. Вĕсене те илемлетмелле.



### Помидорпа, çăмартапа

**5-6 помидор, чĕрĕ 1-2 хăяр, консервланă 1-2 хăяр, пĕçернĕ 2 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 3-4 апат кашăкĕ тип çу, тăвар, сахăр, авăртнă пăрăç, укроппа петрушка кирлĕ.**



Пахча çимĕçе вĕттĕн турамалла. Салата сийлесе /помидор – чĕрĕ хăяр – сухан – çăмарта – консервланă хăяр – укроппа петрушка/ хумалла. Кашни сийе тăвар, сахăр, техĕмлĕх сапмалла. Çиелтен тип çу ямалла.

### Уяв рулечĕ

**Сыснан кăкăр тĕлĕнчи пайĕ, тăвар, пăрăç хутăшĕ, 0,5-шер стакан вăрăсăр хура слива, аçтăрхан мăйăрĕ, курага кирлĕ.**

Какая тăварпа, пăрăçпа сăтăрмалла. Ун çине шӳтернĕ улма-çырла сармалла, вĕтетнĕ мăйăр сапмалла. Рулета çавăрса çыхмалла, фольгапа чĕркемелле. Ăна духовкăра 1,5 сехет пĕçермелле. Фольгана илсен икĕ енчен тата 20-шер минут пĕçерсен рулета хĕрлĕ тĕс çапĕ.

### Çĕр улми нимĕрĕпе çу çырли

**10 çĕр улми, 1 банка çу çырли, пуçлă 1 сухан, тип çу, тăвар, техĕмлĕх кирлĕ.**

Çĕр улмине пĕçермелле, тӳмелле. Вĕттĕн туранă сухана тип çупа ăшаламалла. Çу çырлине çаврашкан касмалла. Çĕр улми нимĕрне суханпа, çу çырлипе пăтратмалла. Çак хутăша кондитер çатăркине тултармалла, чечексем пусса кăлармалла. Ку апата какайпа е кăмпапа пĕрле хурса памалла.

### «Шăккалатпа сыр çумăрĕ»

**1 лимон, 100 грамм шăккалат, 50 грамм сыр кирлĕ.**

Лимона çаврашкан касмалла. Шăккалатпа сыра вĕтĕ терка витĕр кăлармалла. Лимон касăкĕ çине шăккалатпа сыр сапмалла.

## УЯВ ПАЛЛИ

# Çулталăк хӳтĕлевçине сума суса

Мĕн ĕлĕкрен çынсем Çĕнĕ çула кун-çула ырă енне улăштармалли, вăрттăн ĕмĕтсене пурнăçа кĕртмелли чи аслă самант вырăнне йышăнаççĕ. Анчах та хĕвел тухăç ăсчахĕсем палăртнă тăрăх – çулталăк хӳтĕлевçине сума суса уява кĕтсе илекенсене кăна шăпа телей кӳрет-мĕн. Çавăнпа та кил-çурта капăрлатасси çинчен чи малтан шухăшламалла. Кăвак йывăç Лаша – çемьери хаклăха, хутшăнусене çирĕплетекен ăнăçлă паллă.

Кил-çурта илемлетме чылай чухне эпир «çумăрпа», гирляндăпа усă куратпăр. Лаша – виçине пĕлекен, лăпкăлăха юратакан выльăх, вăл ытлашши çутта кăмăлламасть, çавăнпа та пӳлĕме йăмăхакан тĕссемпе илемлетме ан васкăр. Кăвак тата симĕс тĕссем – шăпах вырăнлă. Сăмахран, сĕтел-пукан çине кăвак виткĕч сарăр, çӳлĕк çине кăвак статуэткăсем, çурта лартăр. Ятарласа сăрланă лампа та сенкертерех çутă кӳрĕ.

Такана – управçă, Лаша палли. Унра усал шухăшлă хăнасенчен сыхламалли вăй пур тесе палăртаççĕ. Ăна пӳртре мăшăрлă хисепре çакмалла, чи пысăкки тултан кĕмелли алăк çийĕнче тăтăр.

Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ чухне килте йывăç япаласем пулмаллах, мĕншĕн тесен вăл шăпах лашана çывăх. Халап-юмаха ĕненес тăк, вĕсем телей кӳрекен амулета çаврăнаççĕ, этеме тĕрĕс çулпа пурăнма вĕрентекен ăс-хакăл парнелеççĕ. Фарфор, кантăк,



хрусталь те Лаша кăмăлне çавăрĕçех.

Лаша симĕс курăка юрататать. Пӳрте чăрăш, хыр лăссисемпе илемлетме ан манăр. Вазăсене ешĕл петрушка, укроп, сельдерей, базилик лартса тухăр. Вăрăм черккесене вĕтĕ тăварпа капăрлатма пулать: савăт хĕррине лимон сĕткенĕпе е шывпа йĕпетĕр те тăвар ăшне чикĕр, вăл бокал çумне çыпăçĕ, юр евĕр курăнĕ.

Кӳлнĕ виçĕ лашана вырăссем шăнкăрав çакнă. Кил-çурта илемлетнĕ чух унпа усă курма ан манăр: хăнкăрма сасси усалтĕселтен сыхлать, ачасем те унпа тетте вырăнне хаваспах вылĕç.

Хатĕрленӳ ĕçне пĕчĕккисене те хутшăнтарăр. Вĕсем чӳрече çинче Хĕл Мучи тĕррине хаваспах ӳкерĕç, юр пĕрчисем касса кăларĕç, çип çине шурă мамăк тирсе мăччаран çакĕç.

Чăрăш – Çĕнĕ çулăн чи пĕлтерĕшлĕ палли. Лаша йăла-йĕркене пăхăнакансене хисеплет, çавăнпа та капăр чăрăш лартма ан ӳркенĕр. Хальхинче ăна симĕс, кăвак, хĕрлĕ кăвак теттесемпе илемлетĕр, кĕмĕл серпантин та килĕшӳллĕ курăнĕ. Чĕрĕ чăрăш суйласан Лаша пушшех те савăнĕ.

## ШУТА ИЛĔР

# Мĕн парнелемелле?

Капăр чăрăш айне парне хуриччен малтан тăвансемпе çывăх çынсен шухăш-кăмăлне кăна мар, çитес 2014 çул кăвак йывăç лаша çулталăкĕ пулнине шута хумалла. Хĕрарăма йывăçран ăсталанă шăрça, хаклă чулпа илемлетнĕ капăр эреш, чи çывăх çынна такана е лаша евĕр ылтăн кулон савăнтарĕç. Ковбой хатĕрхĕтĕрĕ, сăмахран, пиçиххи, шĕлепке, джинс шăлавар, каччăн кăмăлне тивĕçтерĕç. Ут тавраш евĕр асăнмалăх япала çемьешĕн чухах. Арçынсем чылайлăха асра юлакан парнене кăмăллаççĕ. Вăл кирлĕ те усăллă пултăр, çав вăхăтрах чуна пырса тивтĕр. Ача валли парне суйлама çăмăл мар. Пылак çимĕçпе, теттепе кăна ан çырлахăр, асамлăхпа тĕлĕнтерĕр. Сăмахран, пĕчĕккисене юмахри çул çӳреве е вĕсем тахçанах ĕмĕтленнĕ çĕре илсе кайма юрать.

Статистика палăртнă тăрăх – пирĕн çĕр-шывра пурăнакансен 23-29% парне вырăнне парфюм, эреш, тетте, канфет, эрех суйлать, 10-13% – укçа е сувенир, 4-7% – чечек, телефон, çипуç, диск, пушмак, йăлара усă курмалли хатĕр, 2% – ресторанти каçхи апат, концерта е театра каймалли билет, 1% – компьютер, автомобиль, çул çӳрев путевки.

Çĕнĕ çул ячĕпе тепĕр чух кирлĕ мар япала туянатпăр та уяв хыççăн унпа усă курмастпăр, вак-тĕвек чăрмантарса кăна выртать. Çавăн пеккисен йышне фарфор пирĕшти, çурта, Хĕл Мучи е Юр кĕлетке ӳкернĕ чашăк кĕрет. Сăмса тутри, нуски, аялти кĕпейĕм, парфюмерипе косметика, супăньпе шампунь тавраш те туянма ан васкăр, ку япаласене çын харпăр хăйне килĕшнине суйлать, унăн кăмăлне сирĕн парне тивĕçтермесен те пултарĕ.

Хăнана пуçтарăннă чух кучченеç илме ан манăр. Канфет, кофе, чей, шампань эрехĕ кил хуçин кăмăлне тупĕç. Ăна чечекпе савăнтарма шухăшларăр тăк çитес çул символĕсене – фиалкăпа лили – туянăр. Уявăн тĕп савăнăçĕ – кӳлнĕ лашапа ярăнни. Çемьепе, тăвансемпе, юлташсемпе пĕрле пухăнсан пурте çак саманта темĕнччен асăнса пурăнĕç.

## ÇĂЛТĂРСЕН ЧĔЛХИПЕ

# 2014 çул тĕнпе савăнтарĕ

**Сурăхсемшĕн** çитес çул çăмăлах мар: çитĕнӳсем тăвас тесен нумай тар тăкма тивĕ. Телее, шăпа хатĕрленĕ тĕрĕслев витĕр тухма сирĕн чун хавалĕ те, кĕлетке вăй-халĕ те çителĕклĕ. Çавăнпах ăраскала ӳпкелеместĕр.

**Вăкăрсене** ку çул сахал мар тĕлĕнтермĕш кĕтет, пурнăçра пысăк улшăнусем те çитĕç. Пулăмсем питĕ хăвăрт аталаннă май тунсăхлама памĕç. Эсир нумай çĕннине вĕренетĕр, паха опыт пухатăр. Çакăншăн шăпана тав тăватăр.

**Йĕкĕрешсем** çак çулталăкри пур «парнене» те кăмăлламĕçха. Çапах ăна япăх тесе тиркеймĕн: ырă кĕтменлĕхсемпе те савăнтарĕ. Чуна пăлхатакан йывăр лару-тăрăва лекесси те пулатех. Чирлесси те инçех мар.

**Раксен** чун суранĕсем пирчес шанăç пур. Тахçан хăвăра кӳрентернĕ çынсене асран кăларса пăрахăр. Ырри çинчен шухăшланипе тĕрекленсе хăвăр тем тума та пултарнине кăтартса ĕнентеретĕр.

**Арăслансене** ăнăçлă çулталăк кĕтет. Вĕсем тахçанхи тĕллевсене пурнăçласа пысăк ӳсĕмсем тăваççĕ. Çĕннине вĕренсе, пĕлӳ шайне ӳстерсе карьера картлашкипе çӳлерех хăпарма е хăвăрăн ĕçе пуçăнса пысăк тупăш илме шанăç пур.

**Хĕрсен** тыткаларăшĕ 2014 çулта самаях улшăнĕ: унччченхи йăласенчен писеççĕ, урăхларах пурăнма тытăнаççĕ. Пур чухне те тĕрĕс çул-йĕр тупаймасан та йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетнипе инкекрен пăрăнма ĕлкĕретĕр.

**Тарасасем** ют çын шухăшне ăша хываççĕ, çакă кашнинчех усă кӳреймĕ. Çулталăкри пулăмсем сирĕн малашнехи кунçула палăртаççĕ – вĕсене тимлĕ сăнăр.

**Скорпионсене** çĕнĕ çул хаклă парнесемпе савăнтарать. Эсир çăмăллăнах çĕнтеретĕр, телейпе ăнăçăва аларан вĕçертместĕр. Хăвăр ырă кăмăллă та вашават пулсан тусăрсем йывăрлăхра пулăшма хатĕр.

**Ухăçăсен** пăшăрханмалли чылай пулать-ха. Çапах хăвăр тăрăшсан çулталăк ăнăçлах вĕçленĕ. Çĕнĕ паллашусем кĕтеççĕ. Унччен япăх çын тесе шухăшланă пĕлĕшех савма пуçлатăр е асамлă юрату тыткăнне çакланатăр.

**Ту качакисен** пĕр вĕçĕнчен тепĕр енне ыткăннăран малашлăх планне йĕркелеме йывăртарах пулĕ. Вĕсем харпăр хăй утăмне тĕрĕс хаклаймаççĕ, анчах ыттисем мĕншĕн шăпах çапла хăтланнине аван чухлаççĕ. Хăшĕ-пĕрне асăрханулăхпа тимлĕх çитменни куç кĕрет.

**Шыв тăкансене** питĕ тулăх та интереслĕ çулталăк кĕтет. Сисĕм-туйăм вăйлă пулнăран туххăмрах тĕрĕс çул-йĕр тупаççĕ, ĕмĕт-тĕллевне çийĕнчех пурнăçа кĕртеççĕ. Вĕсем ăнсăртран «уçăлнă» пултарулăхĕпе ыттисене çеç мар, хăйсене те тĕлĕнтереççĕ. Паллах, куншăн хĕпĕртеççĕ, пуç каçăртма та пăхаççĕ.

**Пулăсем** шăпа пӳрнĕ тĕрĕслевсене çăмăллăнах парăнтараççĕ. Хăйсене çеç шанма хăнăхнăскерсем çын сăмахне итлемеççĕ. Тепĕр чухне йăнăш еннелле сулăнни те сисĕнет, çапах парăнмаççĕ. Çулталăк харпăр хăй тĕллĕн ӳсме, аталанма пулăшĕ.



АСАМЛĂХ

# Атте те кирлĕ

**Ача чухне Çĕнĕ çул уявне чăтăмсăр кĕтеттĕм. Ÿсерехпе, асамлăха ĕненми пулнипе-ши, хавхалану сĕвĕрĕлчĕ.**

Манăн савни артиста вĕренетчĕ. Раштав уйăхĕн вĕçĕнче вăл Шупашкарти тĕрлĕ учрежденире Хĕл Мучи рольне калăпланă май манăн пĕчченех кичемленсе ларма тиветчĕ. Эпĕ ăна культура институтĕнче пĕрре курсах саврăм, хăй те хĕрÿ туйăмне пытармарĕ. Хам килте кĕçĕнни пулнă май 20 çултах ача пирки ĕмĕтленме пуçларăм, пепкене çупăрлас-ачашлас килетчĕ. Юрăпа 3 çул чиперех хутшăннăран кĕçех çемье çавăрасса шаннăччĕ. Пĕррехинче хăвăртрах амăшĕ пулас килнине пĕлтерсен савнă çыннăм: «Халех ачапа çыхланса ларар марха. Малтан ура çине çирĕппĕн тăмалла», – тесе кăмăла хуçрĕ.

Çав каçхинех мирлешрĕмĕр пулин те хутшăнусенче ăшăлăх çухалчĕ. Тепрехинче Юра пĕр вăхăт уйрăмшаррăн пурăнма сĕнсен те питех тĕлĕнмерĕм. Вăл Хĕл Мучи тумне тăхăнса черетлĕ хут елкăна тухса кайрĕ. Çапла шăпах Çĕнĕ çул уявĕ умĕн пĕччен юлтăм. Кичем пуллах. Шкулта пĕрле вĕреннĕ тантăшăм шăнкăравларĕ, ача çуртĕнче ĕçлекенскер мана 1-2 сехетлĕхе Юр Пике пулма ыйтрĕ. Тунсăх серепинчен хăтăлас ĕмĕтпе эпĕ Лизăн сĕнĕвĕпе килĕшрĕм.

Раштав вĕçĕнчи хавасла кун эпĕ хÿхĕм çи-пуç тăхăнтăм, чиперлентĕм, ешĕл елка тавра пухăннă ачасене Хĕл Мучипе пĕрле савăнтартăм. Пурнăçри чи пысăк телее – ашшĕ-амăшĕн ăшшине – туйса курман шăпăрлансем уявра чунранах хĕпĕртерĕç, пĕр-пĕринпе ăмăртсах сăвă каларĕç, юрăсем шăрантарчĕç, ташларĕç. Анчах пĕр хĕр пĕрчи, чÿрече патĕнчи пукан çине ларнăскер, темшĕн пĕччене тунсăхласа ларчĕ. Унăн салху куçне асăрхасан чĕрем хĕссе ыратрĕ, сценарипе килĕшÿллĕн мĕн калаймаллине те мантăм.

Каярахпа Лиза мана ку ачан шăпипе паллаштарчĕ. Аришăна амăшĕ шăпах Çĕнĕ çул умĕн вокзала пăрахса хăварнă-мĕн. Полици ĕçченĕсем ăна интерната илсе килнĕ. Çавăнтанпа хĕр ача çулленех ĕлкăсем йăмăх çутипе илĕртсе куç хĕсме пуçласса кĕтет, амăшĕ таврăнасса шанатьмĕн.

Унтанпа икĕ эрне иртрĕ пулин те Аришăн тунсăхлă сăнне манаймарăм. Пĕррехинче пурнăçри пĕлтерĕшлĕ утăма тума хăюлăх çитертĕмех: ача çуртне кĕтĕм те хам çак хĕр ачана усрава илесшĕн пулнине пĕлтертĕм. Телейлĕ куна кĕтсе илтĕмех. Ылтăн кĕркунне çывхарсан тинех Аришăна хамăн хваттере çавăтса кĕтĕм: «Халĕ, хĕрĕм, иккĕн пурăнăпăр ĕнтĕ», – тесе ăна ăшшăн çупăрларăм.

Акă каллех Çĕнĕ çул çывхарать. Ăна текех пĕччен кĕтсе илмĕп-ха, чĕвĕлти чĕлхеллĕ Ариша çумрах, тунсăхлама памĕ. Эпĕ тĕрлĕ асамлăха тахçанах шанми пулнă, çапах хĕр пĕрчин савăк кăмăлĕшĕн нимĕн те шел мар. Иксĕмĕр елкăна капăрлатнă чухне вăл шурă хут çине темскер çырчĕ те ăна тирпейлĕн хуçлатса уяв йывăççĕ айне хучĕ, кунта хăйĕн ĕмĕтне палăртнине систерчĕ. Хĕрĕм лавккари çемçе теттесен хушшинчи çăмламас упа çури çинчен куç илменнине асăрхасан эпĕ тепĕр кунах çак парнене туянтăм, вăхăтлăха кÿршĕсем патĕнче пытартăм.

Çĕнĕ çул каçĕ çитрĕ. Ариша çывăрасшăн мар, тĕлĕнтермĕш пуласса кĕтет, асамлăха шанать ĕнтĕ. Иксĕмĕр уяв сĕтелне илемлетрĕмĕр, теттесене те кĕрекене вырнаçтартăмăр.

Çур çĕр çитесси 5 минут юлсан алăкран шаккакан тупăнчĕ. Эпĕ кÿршĕ арçынни Хĕл Мучи тумне тăхăнса Ариша валли хам хатĕрленĕ парнене кĕртсе парасса шаннăччĕ. Васкасах алăка уçрăм. Анчах унта Юра тăрать иккен. Вăл мана йăтса илчĕ те: «Юрататăп сана! Пурнăçран та ытларах саватăп!» – тесе пĕр вĕçĕмсĕр çаварчĕ.

Каярахпа, Ариша çывăрса кайсан, Юра артист пурнăçĕ хăйне киленÿ кÿменнине пĕлтерчĕ. «Эпĕ чыс-хисепе çĕнсе илесшĕн çунтăм, пысăк укçана хапсăнтăм. Мĕн тери суккăр пулнă çав. Тахçан санпа пĕрле пурăннă чухне телейĕм çумрах иккенне те ăнланман. Тинех куçăм уçăлчĕ», – тесе вăл кĕсйинчен илемлĕ курупка кăларчĕ. Унти хÿхĕм çĕрре курсан ăна Çĕнĕ çул парни пек йышăнас тĕллевпе елка айне хурас килчĕ. Çакăнтах Ариша çырăвне асăрхарăм та ăна уçса вуларăм. «Пирĕн атте те пултăрччĕ», – шăрçаланă хĕрĕм. Манăн пурнăçа та асамлăх таврăнчĕ иккен. Савăнăç куççулĕ пит тăрăх йăлтăртатса анчĕ.

**АКУЛИНА.**
Шупашкар хули.

АХ, АНЧАХ...

# Килсем хăнана, хĕрĕм…

Вун çичĕ çул пурăннă хыççăн упăшка пăрахса кайрĕ. Унтанпа 5 çул иртрĕ. Каялла таврăнасса шаннăччĕ те, анчах çĕнĕ çемьере телей тупнă вăл, çамрăк арăмĕ унран ача çуратнă ĕнтĕ. Тĕпренчĕкĕмсем Çĕнĕ çула юлташĕсемпе уявлаççĕ. Çапла виçĕ çул телевизорпа çеç черкке шаккарăм. «Кăçал пĕччен юлмастăпах», – тесе малтанах тĕллев лартрăм. Мăшăр тупасси çăмăл мар иккен. Тусăмсем паллаштарнисенчен пĕри те кăмăла каймарĕ: пĕри – ĕçкĕç, тепри нускине çумасть...

Хаçата пĕлтерÿ патăм. Кĕçех шăнкăравсем килме тытăнчĕç. Етĕрне тăрăхĕнчи Саша хăйĕн патне яла пурăнма чĕнет: пысăк хуçалăх тытаканскер чылай сысна усрать-мĕн. Çав вырăнта мĕнле самăртмалли пирки сехечĕсехечĕпе калаçать вăл. Сыснасем мĕн чухлĕ ÿт хушнине те кунсеренех пĕлтерсе тăчĕ. Пĕр кун хулара тĕл пулма калаçса татăлтăмăр. «Урамра çÿреме эпир 17-ри яшпа хĕр-упраç мар ĕнтĕ. Тен, сан пата хваттере каяр?» – сĕнчĕ хайхискер. Пĕрре курнă арçынна киле чĕнме шиклентĕм, калаçса ларма кафене чĕнтĕм. «Укçа чиксе тухман эпĕ», – пĕлтерчĕ Саша. Хамăн шутранах чейпе хăналама килĕшрĕм. Анчах калаçу каллех сыснасем çинче куçрĕ: ама çăвăрлаттарасси, вырăх апачĕ туянасси, тупăш мĕн чухлĕ кĕресси маншăн кăсăклă пуласса шанчĕ, ахăртнех, арçын. «Сана чечек вырăнне упрăттăм, вырăх патне кăлармăттăм», – тенине ĕненес килмерĕ темшĕн.

Елчĕк енчен Вова шăнкăравларĕ. Мăшăрĕ тухса кайнă иккен унăн. «Хамах иртĕхтертĕм, укçа тыттармалла марччĕ, ытларах хăлха чикки памаллаччĕ», – арăмĕ пирки сăмах хускатсанах тарăхрĕ арçын. «Хĕрарăмсем пурте пĕр шуйттан: çÿçĕ вăрăм та – ăсĕ кĕске», – çапла касса татнă хыççăн чун сивĕнчĕ. «Такама тупрăн-и, кала? Мĕнле çын вăл, кам?» – аптăратрĕ пур пĕр кĕвĕçскер. Вовăран аран хăпса пĕтрĕм.

Канаш районĕнчи Сергей мĕншĕн хусаха юлнин вăрттăнлăхне уçса пачĕ: арçын хăвачĕ çук-мĕн. Сывлăхне тĕрĕслеттерме темиçе больницăна та çитнĕ мăнтарăн, тухтăрсем сăлтавне палăртайман. Вĕсен йăхĕнчи чылай арçын çапла шар курать-мĕн. Савăшу киленĕвне парнелеймен арçынпа çыхланма килĕшмерĕм.

Çĕнĕ çул çывхарсах пычĕ. Савни çаплах тупăнмарĕ, шанчăкăм пĕтнĕпе пĕрехчĕ. Пĕр кун вара Çĕрпÿ районĕнчен Марье аппа шăнкăравларĕ, ывăлне Кольăна лайăх арăм тупса парасшăн вăл. Арçын мăшăрне усал шыççа пула икĕ çул каялла çухатнă, вĕсен хĕрĕсем аслă шкулта вĕренеççĕ. Юлашки вăхăтра Коля хуйхине эрехпе пусарать-мĕн. «Çирĕп хĕрарăм аллине лексен ĕçме пăрахĕччĕ, ниçта та тухса çÿремест вăл, никампа та паллашасшăн мар. Алли ылтăн, вăл пурнăçлайман ĕç çук, кăмăлĕ лайăх, арăмĕпе сасă хăпартса калаçса курман. Пăсăлсах каясран хăратăп-çке... Тен, пирĕн пата хăнана килетĕн, хĕрĕм», – кинемей сасси чуна пырса тиврĕ. «Хĕрĕм» тесе мана тахçанах никам та каламанччĕ, анне çут тĕнчерен питĕ ир уйрăлнă, хуняма та тахçанах çĕр çинче çук ĕнтĕ. Кольăн амăшĕ кашни кунах шăнкăравларĕ, ывăлĕ пирки каласа кăтартрĕ. Калаçнă май Марье аппа пирĕн тăрăхра çуралса ÿснине пĕлтĕм. Çывăхри ялсене, Ишек пасарне çÿренине те аса илчĕ вăл, иксĕмĕр палланă çынсем те тупăнчĕç. Кинемейĕн шăпи кăсăклă: упăшки ăна çамрăклах пилĕк ачапа тăлăха хăварнă. Вĕсене ура çине тăратма çăмăл килмен хĕрарăма. Фермăра кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ Марье аппа. Вăл тахçантанпах хутшăннă пĕлĕшĕм, çывăх тăван пекех туйăнчĕ. «Çĕнĕ çул кĕтсе илме пирĕн пата килсем, пĕччен кичем пулĕ сана», – чĕнчĕ хăнана ватă çын. Кучченеç туянтăм та çула тухрăм.

Кинемей мана ял вĕçĕнче кĕтсе илчĕ. «Шыраса тупаймăн та, каялла кайăн», – шÿтлерĕ ăшă чунлăскер. Коля мана килĕшет-и е çук-и, пирĕн хушăра юрату çуралĕ-и – кун пирки пуçа ватмарăм эпĕ. Юлташ тупăннăшăн савăнтăм.

**Алина ИÇĔМПИ.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Кĕвĕçнине пытараймарăм



Мĕнле шухăш-кăмăлпа кĕтсе илетĕп-ха эпĕ Çĕнĕ çула? Манăн çунат хушса вĕçес килет. Мĕншĕн тесен кĕçех маншăн урăх пурнăç пуçланĕ. Тĕнчери чи вăйлă та пултаруллă яшпа пĕрлешме тĕв турăмăр. Эпир пĕрпĕрне çав тери хытă юрататпăр. Чим, мĕн тăвать-ши вăл çак самантра? Шăнкăравласа пăхам-ха ун патне. «Эпĕ – канашлура, чунăм», – илтĕнчĕ лини тепĕр вĕçĕнче. Юрать, каярах çыхăнăп.

Çăмăлах килмерĕ ку çул. Пĕр вăхăт калаçмасăр, тĕл пулмасăр пурăнтăмăр. Сана урăх хĕрпе юнашар утнине курнă хыççăн пулчĕ-ха ку. Сан ытамна лекнĕ чиперкке хĕвел пекех йăл-ял çиçетчĕ. Вăл çак тĕл пулăва тахçантанпах кĕтнĕ тейĕн. «Кĕвĕçетĕн-им?» – пуçна каçăртса пăхрăн ман енне. Мĕнле хăйрăн эсĕ çапла ыйтма? Савнисен куç умĕнчех пĕр-пĕрне улталама юрать-и? Çапла хăтланни мана килĕшмерĕ. Эпĕ, паллах, кÿрентĕм. Телефон номерне улăштартăм. Ĕçе пăрахса Мускава тухса кайрăм. Унта сана манасшăнччĕ. Çук, пултараймарăм. Тĕлĕкре те санпах аташрăм, вĕççĕр-хĕрсĕр тĕнчере савнине шырарăм.

Ĕç тупаймарăм. Кам кĕтсе лартăр унта мана? Тепĕр тесен, тара тытнă хваттертен тухас та килместчĕ. Пĕрре чутах пăтăрмаха çакланаттăм. Хула тăрăх вăхăт ирттерсе çÿренĕ хыççăн хваттере таврăнаттăм. Подъездра пĕр арçын асăрхарĕ мана. «Мĕн çухатнă эсĕ кунта? Хăнана килтĕн-и?» – тет. Тÿрех сăмах хушма аптăрарăм, çухалса кайрăм. Хуçа хваттерте укçала пурăнни çинчен никама та калама хушман. Çуртран тухса каясшăнччĕ – ĕлкĕреймерĕм. Арçын çĕçĕ кăларчĕ те хăйĕн хыççăн утма хушрĕ. Тăван тăрăхра кĕрешÿ секцийĕнчен тухма пĕлменни пулăшрĕ. Самантрах урайне çапса ÿкертĕм ăна. Çĕçси те айккинелле вăркăнчĕ... Хваттере кĕрсе япаласене пуçтарсан тин сывлăш çавăрса илмешкĕн канма лартăм. Тунсăх пусрĕ. Куççуль капланса килчĕ – пур пĕрех йĕмерĕм, хама алла илтĕм. Мĕншĕн макăрмалла-ха? Манăн нимĕн те ыратмасть вĕт! Шухăшларăм-шухăшларăм та киле таврăнма билет туянтăм. Мĕн çухатнă эпĕ пысăк хулара?

Шупашкара çитсен юлташсене хăнана чĕнтĕм. Вĕсен пурнăçĕнчи çĕнĕлĕхсем çинчен пĕлес килчĕ. «Миша санпа калаçасшăнччĕ. Мĕншĕн çак таранччен çыхăнман эсĕ унпа?» – ÿпклеме пуçларĕç хĕрсем. Манăн чун ун патнех туртăннине сисрĕç-ши вĕсем? Кăмăла çавăрчĕç тантăшсем. Çапах Миша патне шăнкăравлама хал çитетчĕ-ши манăн? Вĕсем хĕтĕртнипе алла телефон тытрăм. «Салам, савăнăçăм, юратăвăм, кăвакарчăнăм, чечекĕм, çăлтăрăм....» – сасса илтсен чĕкеç пекех чĕвĕлтетрĕ чун çунтармăш. Мĕн чухлĕ ăшă сăмах пĕлет вăл. Мана савăнтарма нумай кирлĕ-и?

Хайхи çав хĕрпе шкулта пĕр парта хушшинче ларни, ташă каçĕсене пĕрле çÿрени пирки каласа кăтартрĕ вăл. Лариса мăшăрланнине, икĕ ача çуратнине те пĕлетĕп халĕ. Ют арçынпа ыталанса утнине курсан упăшки мĕн калĕччĕ-ши ăна? Çакăн пирки Миша та, Лариса та шухăшламан паллах.

Каçартăм ĕнтĕ савнине. Тĕрĕссипе, вăл айăпа та кĕмен. Малтанах йăлт тĕпчесе пĕлмелле пулнă. Эх, ĕçрен хăвăртрах киле таврăнтăрччĕ вăл. Ăна курас килет.

**Елена ЦВЕТКОВА.**





Левтина МАРЬЕ

# Хурăнлăхра асамлă вырăн

/икĕ пайлă, 6 курăнуллă драма/

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 44-51-мĕш номерсенче/.

**Кĕтмен çĕртен Александр Ильичăн тепĕр енчи хул пуççийĕ çинче çăмлă йытă лаппи курăнса каять. Шăппăн харлатса илни илтĕнет. Александр Ильич куç хĕррипе сăнать те хăранипе чĕтрене ерет.**

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. А-а-а-а-а...

САША */тĕлĕнсе/.* Александр Ильич, мĕн пулчĕ сире?

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */тапранма хăраса/.* А-а-а... м-м-ман ç-ç-çинче й-й-йытă...

САША */сиксе тăрать те йĕри-тавра пăхкалать/.* Нимĕнле йытă та çук кунта...

**Сашăна систермесĕр йытă лаппи Александр Ильича пуçĕнчен питĕ хытă çапать те çухалать.**

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. А-а-а! Пуçа! Пу-лă-шăр-р! */Тапса сикет те çавăнтах курăнми пулать/.*

САША. Турăçăм! Рома каласа пани тĕрĕсех-шим вара?.. Ку чирлĕ çынна «пулăшу» чĕнсе илсе хăвăртрах сыватмалла мар-ши? */Утса каять/.*

**Тепĕр енчен Верăпа Роман хашкаса чупса çитеççĕ. Вĕсем купăспа сумкăсем йăтнă, сак çине хурса канса илесшĕн.**

РОМАН. Çтаппан пичче, чирлĕскер, купăс калайрать-и-ха?

ВЕРА. Тепле çав...

РОМАН. Ял уявне иртте-рес тесе ахалех пуçăнтăн.

ВЕРА. Çур çул каяллах плана кĕртсе хăварнă та... Тата аякри хăнасем те килсе çитме пултараççĕ...

РОМАН. Эх, Ваня пурăннă пулсан!..

ВЕРА. Паян ăна та асăнса ирттермелле пулать ĕнтĕ.

РОМАН */купăс тытса хурлăхлăн/.* Кайрăмăр...

**Иккĕшĕ те пуçĕсене чиксе хыпалансах утса каяççĕ. Хурăнсен хушшипе Софья Юрьевна килни курăнать. Вăл илемлĕ тумпа, хурăнсене ачашшăн ытала-ытала юрлать.**

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА.

Яштака, илемлĕ, сăну
пит хитре,
Юрату хĕлхемĕ юлчĕ
чĕрере.
Каç пулсан чупаттăм хурăн
патнелле,
Сана ыталаттăм
юратнипеле.

**Софья Юрьевнăна хирĕç тепĕр енчен Егор Кузьмич утса тухать. Вăл хура илемлĕ костюмпа.**

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА, ЕГОР КУЗЬМИЧ */хушса юрламаллине пĕрле юрлаççĕ/.*

Ăçта-ши çухалчĕç
Хĕрӳ сăмахсем?
Канăçа хускатрĕç
Аса илӳсем...
*/Пĕрле пуçлаççĕ/.*
Ман сана курасчĕ кампа
утнине,
Еплерех, пĕлесчĕ,
тунсăхланине.
Тен, телейсĕр эсĕ?
Эпĕ те пĕччен...
Сукмакпа тухасчĕ хирĕç
ик енчен.
Хушса юрламалли:
Ăçта-ши çухалчĕç
Хĕрӳ сăмахсем?
Канăçа хускатрĕç
Аса илӳсем...

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Мĕнле пурăнатăр, Софья Юрьевна?

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Пурăнатпăр-ха, Егор Кузьмич... Тепле пулсан та пурăнмаллах-çке...

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Ваня çинчен пĕлтерне хыпар пире пурне те çав тери пăшăрхантарать. Унтанпа ĕнтĕ икĕ уйăх та иртрĕ...

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Çаплах çав... Хĕрĕн телейĕ амăшĕнчен иртмест тени чăнах та тĕрĕсех иккен... Хам пирки мар, Саша çинчен шухăшласа кулянатăп. Савнийĕн çырăвĕсене час-часах вуласа макăрать. Вилнĕ тенине ĕненесшĕн те мар. Кунĕн-çĕрĕн унран хыпар килессе шанать.

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Мĕн тери илемлĕ те таса чунлă хĕр...

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Эсир ял уявне кайма тухрăр-им?

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Сире курассишĕнех хурăнлăхпа утса килтĕм. Ах, Софьюшка, çак пурнăçра иккĕн юнашар пĕр сукмакпа утайрасчĕ.

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Каçарăр та, хамăрăн иртсе кайнă юратăва урăх хускатас марччĕ. Татах та кулянмалли сиксе тухĕ. Сывă пулăр! */Питĕ хăвăрт утса курăнми пулать/.*

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Софья!.. */Хаш сывласа илет те пуçне чиксе шухăша каять, тепĕр еннелле утать/.*

**Магнитофон сасси илтĕнет. Саша чупса килет. Ун хыççăн чечек çыххи тытнă Александр Ильичваскать, хĕре хăваласа çитесшĕн.**

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Саша! Сашенька! Тăхта-ха!

САША */тарăхса/.* Эпĕ сире каларăм вĕт-ха, манăн пĕччен пулас килет тесе.

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */чечек çыххине тыттарса/.* Уяв ячĕпе саламлатăп сана, Сашенька.

САША */ирĕксĕрех тытса/.* Тавтапуç, Александр Ильич, чăрманмалла марччĕ...

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Тен, ман ресторана кайăпăр...

САША. Каçарăр та, манăн пĕр çынна та курас килмест, никампа та калаçас та килмест... */Çаврăнса утма тăрать/.*

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */хĕре аллинчен ярса тытать, чĕр куçленсе/.* Сашенька, çăлтăрăм, эпĕ сана пĕтĕм чунтан юратса пăрахрăм...

САША */тĕксе/.* Мĕн эсир? Мĕн хăтланатăр? Тăрăр!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Тух мана качча, эпĕ питĕ пуян... Шупашкарта манăн тăватă пӳлĕмлĕ хваттер пур. Кунта эпĕ врачсем сĕннипе кăна, уçă сывлăшра лайăххах сывлас тесе, пӳрт илсе ятăм. Ан хăра, Сашенька, эпĕ халь йăлтах чĕрĕлтĕм. Санпала Крыма кайса канăпăр, машина илсе паратăп, мĕн кирли йăлтах пулĕ...

САША. Юратмастăп эпĕ сире! Тата хамăн юратнă савнине никампа та улăштарас çук! Илтетĕр-и! Никампа та!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Вăл тахçанах вилнĕ! Пĕтнĕ!

САША. Чĕрĕ вăл! Чĕрĕ! Чĕрĕ! Ярăр мана! Ярăр!

**Саша кăшкăрнине илтсе пĕр енчен Софья Юрьевна, тепĕр енчен Роман чупса çитеççĕ.**

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА! Саша! Кам ку?!

САША. Аннеçĕм, ку...

РОМАН */тӳрех чупса пырса Александр Ильича хыçалтан ярса тытать те çĕклесе тăратать/.* Яр, тенĕ сана! Путсĕр çын!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */хирĕç чышса ярать/.* Ан тĕкĕн, имçам!

РОМАН. А-а, çапла-и-ха?! Юлташ хĕрне кӳрентерме ирĕк памастăпах! */Тĕртсе ярать те лешĕ вăркăнса сак çине кайса ларать/.*

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА */палласа илсе шартах сикет/.* Рома! Чарăнăр! Тăхта!.. Турăçăм!.. Пулма пултараймасть!.. Эсирех-и ку?!

САША. Аннеçĕм! Эсĕ ăна паллатăн-им?!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */сиксе тăрать/.* Софья?

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Ман пурнăçа тĕп туни çитмест-и-ха? Халĕ тăван хĕрĕн пуçне çиес тесе пурăнатăр-и-ха çакă ялта?!

САША. Атте?!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Саша – манăн тăван хĕр?!

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Халех пирĕн ялтан тухса кайнă пултăр! Илтетĕр-и?! Халех!!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */ним тума аптраса тĕлĕннипе чĕр куçленет/.*

Каçарăр... каçарăр мана... Софья, Сашенька... каçарăр...

РОМАН */çав тери тĕлĕнсе пăхса тăнă хыççăн ун патне утса/.* Тăрăр, ирсĕр çын! Барсике те наркăмăш парса вĕлертĕр! Сирĕн пек хура юнлă усал çыннăн – тасални паха!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ */ерипен тăрса утса каять. Юлашкинчен çаврăнса пăхать/.* Каçарăр...

РОМАН. Утăр, утăр!

**Александр Ильич хăвăрт утса курăнми пулать. Роман ун хыççăн утса пыраканскер каялла чупса таврăнать те Софья Юрьевна патне пырса тăрать.**

РОМАН. Софья Юрьевна, иртнишĕн... тархасшăн, каçарăр мана...

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Мĕн эсĕ, Ромочка? Эпĕ сана ăнланатăп...

РОМАН. Тавтапуç... */Александр Ильич хыççăн чупса кайса çухалать/.*

САША */куççуль витĕр амăшне ыталать/.* Аннеçĕм, эсĕ аттене яланах вилнĕ теттĕн те...

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА */куççульне шăлса/.* Ах, хĕрĕм, диплом илсенех юратнă çынна качча тухатăп тесе эпĕ те кунĕн-çĕрĕн ĕмĕтленсе пурăнаттăм. Анчах та çак çын мана вăйпах мăшкăлларĕ те ята ярас мар тесе ирĕксĕрех аякка кайса пурăнма тиврĕ. Тăван мар анне патне «качча тухрăм» тесеултавлă çыру çырса ятăм. Эсĕ çуралтăн...

САША. Ман ята эсĕ...

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Ун ячĕпе мар, манăн тăван аннене Александра тесе чĕннĕ. Ăна чунтан хисеплесе сана ун ятне патăм.

САША. Тавтапуç сана, юратнă аннеçĕм, пуриншĕн те тавтапуç...

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА. Темшĕн-çке, хĕрĕм, пирĕн иксĕмĕрĕн те юратура телей пулмарĕ...

**Çав вăхăтра хурăнсен хушшипе Ваня утса килни курăнса каять. Вăл моряк тумĕпе.**

ВАНЯ. Саша!

САША. Ваня? Ванечка!

**Пĕр-пĕрин патне чупса пырса ыталанса илеççĕ, макăраççĕ.**

ВАНЯ. Сашенька, савниçĕм, эсĕ мана манмарăн-и?

САША */куççуль витĕр/.* Çук, çук, Ванечка, кунĕн-çĕрĕн кĕтрĕм, вилнĕ тенине ĕненмерĕм, мĕншĕн тесен эпĕ сана çав тери юрататăп, чунăм... çăлтăрăм...

**Çавăнтах Степан Игнатьевич, Улькка, Кĕтерне пырса çитеççĕ.**

СТЕПАН ИГНАТЬЕВИЧ. Ваня?! Мăнукăм!..

ВАНЯ. Асатте! Манăн хисеплĕ асатте!

СТЕПАН ИГНАТЬЕВИЧ */мăнукне ыталаса/.* Чĕрĕ! Чĕрĕ! Нивушлĕ кĕтсе илтĕмех? Тавах турра!

**Романпа Вера тата Егор Кузьмич та килсе çитеççĕ. Егор Кузьмич Софья Юрьевнăпа юнашар пырса тăрать.**

РОМАН. Иван! Тус-юлташăм! Чĕрĕ!

ВАНЯ. Роман! Никама та парăнман! */Юлташĕпе ыталанса илеççĕ/.*

ВЕРА */алă парса/.* Сана халь паллама та çук! Мĕн тери илемлĕ, паттăр моряк!

ВАНЯ. Туй тумарăр-и-ха?

РОМАН. Сансăр мĕнле туй пултăр?

**Савăннипе пурте макăраççĕ. Ыттисене те алă парса тухать, ыталаса саламлать. Юлашкинчен Барсик вил тăприне асăрхать, унта чупса каять. Пурте шăпăрт пулаççĕ.**

ВАНЯ */чĕр куçленсе/.* Тăпру çăмăл пултăр, Барсик... Тавтапуç, сана... */Пĕр чечек татса илет те Сашăна пырса тыттарать/.* Чунтан юратнă савниçĕм, санăн хĕлхемлĕ юратăву мана вилĕмрен çăлăнма пулăшнăшăн тата таса чунпа кĕтсе илнĕшĕн – тайма пуç. Пурне те сире тавтапуç.

СТЕПАН ИГНАТЬЕВИЧ. Тавах Турра! Ăçта купăс?! Савăннипе тăсса ярас!

ВЕРА */купăсне тыттарса/.* Ай, маттур та! Калăр-ха, калăр, Çтаппан пичче.

**Степан Игнатьевич купăс калать. Ваня чăваш ташшине пуçласа Сашăна чĕнсе кăларать. Пурте алă çупса такмаклаççĕ.**

Яла таврăнчĕ моряк
Сар хĕр пуçне çавărма.
Юратаççĕ как-никак,
Эпир хатĕр туй тума.
Туйне тума чару çук,
Паян тесен паянах.
Пĕр-пĕрне юратнă чух
Килĕшмелле çавăнтах.

*Чаршав.*



## СĂВĂ СĔВЕМĔ

Лидия САРИНЕ

### Хĕл Мучирен тарма çук

Çĕн çул çитрĕ пулмалла,
Тухса пăхăр тулалла.
Те пит хытă кĕтнĕрен
Ав шаккать чӳречерен.

Уçса ятăм алăка
Кулса ятăм сасăпах, –
Шап-шур Хĕл Мучи тăрать,
Ман çине чеен пăхать.

– Илсе килтĕм сан валли
Уявра тăхăнмалли.
Шурă кĕрĕк, шур кĕпе,
Пулăн эсĕ Юр Пике!

Сăну санăн пит хитре,
Кулă çиçрĕ ман питре.
Çĕн çула эп тав тăвам,
Кил-ха, чăпăрт чуп тăвам!

Ыталасшăн тăрăшать,
Чуп тумашкăн кармашать.
Чĕрем сисрĕ: май та çук,
Хĕл Мучирен тарма çук!

ИСТОРИРЕ ЙĔР ХĂВАРНĂ ...ЕРКĔНСЕМ

*Тĕлĕнмелле те, Таис темшĕн Фрина гетера пек хавхалану кўреймен арçынсене: пĕр скульптор та, ўнерçĕ те унăн кĕлеткине курса пуç çухатман, искусство пĕр çынни те унăн сăн-сăпатне ўкермен, скульптура калăпламан. Афина Таисĕ ахаль-махаль гетера мар, Александр Македонскийĕн çывăх тусĕ тата еркĕнĕ пулнине кура пушшех те тĕлĕнтерет çакă. Каярахпа хĕрарăм Египет патшин Пĕрремĕш Птоломейĕн иккĕмĕш арăмĕ пулса тăнă, унран Эйрена хĕр ача тата Леонтиск ывăл çуратнă. Çул çыравĕсенче те Таис çинчен нимĕн те тупса вулама çук. Çак гетера çинчен çынсен асĕнче те, историре те нимĕн те ан юлтăр тесе куçа курăнман темĕнле вăй тăрăшнă тейĕн. Çапах та вăл тăрăшнинчен усси пулман – Афина Таисĕн ячĕ халăхра упранса юлнă. Ăна пĕлеççĕ, унпа кăсăкланаççĕ. Патриот туйăмĕпе çыхăннă пĕртен пĕр утăма пула ĕмĕрсен хушши ламран лама куçать çак хĕрарăм ячĕ.*



# Афина Таисĕ

## Тавçăруллă грексем

Çак гетера пурнăçĕ кăсăклантарнипех Иван Ефремов ун çинчен “Таис Афинская” кĕнеке çырнă. Ăна вулама, тен, çăмăлах мар, анчах та çак хайлавпа паллашма кахал кăна ăнтăлмĕ. Тахçан-тахçан пулса иртнĕ ĕç-пуçпа паллаштарать Иван Ефремов. Интернет çинчен илтмен те ун чух çынсем. Анчах та арçын – хĕрарăм патне, хĕрарăм арçын патне мĕн ĕмĕртен туртăнать. Мĕн тумалла кун пек чухне? Çук, выльăх туйăмĕ çинчен пымасть сăмах. Культурăллă çынсем çапах та сĕтел хушшинче кăмăллăн каласса ларма юратаççĕ, тўрех вырăн çине сĕтĕрмеççĕ хĕрарăмсене. Мĕн шухăшласа кăлармалла-ха апла тăк? Грексем такампа та вăрçă пуçарни паллă. Тăнăç самантра, мирлĕ пурнăç кĕввипе чун тулнă вăхăтра хĕрў çапăçу шавĕпе асапланакан пуçа ăçта кайса чикмелле? Ăçта канăçлăх тупмалла? Грексем философсем пулни те никамшăн та вăрттăнлăх мар. Эх, илемлĕ сĕтел хушшинче пылак чей ĕçнĕ май хитре хĕрарăмпа калаçса ларма май пулсан мĕн тери аванччĕ те... Çук, ĕмĕтне пурнăçа кĕртеймен грек – грек та мар. Паттăрсен кăмăлне гетерăсем лăплантарма пултарнă. Çак хĕрарăмсенчен кашниех – питĕ илемлĕ, ăслă, илĕртўллĕ, чунпа пуян тата пултаруллă! Пирĕн эрăччен IV ĕмĕрте пурăннă Афина Таисĕ шăпах вĕсен йышĕнчен пулнă. Хĕрарăм кăмăлĕн çўлерех асăннă енĕсемсĕр пуçне вăл хăюлăхпа, чăрсăрлăхпа, паттăрлăхпа – салтака кирлĕ пур енпе те – палăрнă. Унсăр пуçне Таис тĕлĕнмелле ăслă тата ырă кăмăллă пулнă. Хавасласкер, мăн кăмăлласкер, теветкеллĕхрен шикленменскер, илемлĕскер ытти гетера хушшинче тўрех палăрса тăнă. Унпа танлашма, паллах, ун шайĕнчи арçын кăна пултарнă. Чи вăйли, чи пултаруллли, чи хăватли. Чăн та, тупăннă çакăн пек арçын – Македони патши Александр.

## Вутăшпи

...Птолемей палламан хĕрарăмран куçне илеймен. Турă евĕрскер тинĕс шывĕпе кăпăкĕнчен тухнă тейĕн. Пăхăр сăн-пит, сăрă куç, хуп-хура çўç... Афина ытти хĕрарăмĕнчен пачах та уйрăлса тăнă. Птолемей хăй ăçта пулнине те манса кайнă тейĕн. Каярахпа çакна тавçăрнă арçын – хĕвел çинче пăхăр тĕслĕ пуличчен ятарласа хĕртĕннĕ пике. Кун пек чухне малашне ĕнтĕ хĕвел питтинче пиçсе каяссинчен хăрамасăрах çўреме пулать. Афина чиперукĕсем вара шăпах çакăнтан шикленнĕ-çке. Вĕсем, чернил тĕслĕ пулса ларнăскерсем, каярахпа çын умне кĕлеткисене хупламасăр тухайман. Ку вара, пăхăр ўтлĕскер, Цирцея е Минос хĕрĕсенчен пĕри евĕрлĕскер – унăн юнĕнче хĕвел чупать тейĕн – Птолемей умĕнче жрица евĕр пуçне каçăртса тăрать. Çук, паллах, турă та, жрица та мар вăл, кĕлеткипе çўллĕ марскер. Çап-çамрăкскер. Аттикăра, пĕтĕм Элладăри пекех, сарă çўçлĕ те вăрăм хĕрсенчен суйлаççĕ жрицăсене. Анчах мĕншĕн вăл хăйне ытла та лăпкăн тытать? Пĕр-пĕр чиркўре тейĕн... Çаппа-çарамас тата – чăнласах тинĕсрен тухнă пек... Çакăн пек пуçланать Иван Ефремовăн “Таис Афинская” кĕнеки, гетера илемĕпе пултарулăхĕ çинчен кăна мар, унăн ăсĕпе чеелехĕ çинчен те каласа кăтартаканскер. Кам-ха вăл çапах та – хăйне арçынсемпе тан тытакан чăрсăр та хăюллă хĕрарăм, историе кĕрсе юлнăскер, Македони патши Александр хăй асăрханăскер?..

## Тавăру

Патшан тата çар пуçĕн еркĕнĕ пулса тăрсан Таис походсене унпа пĕрлех çўренĕ. Пĕррехинче, перссене парăнтарнă хыççăн, вĕсем сĕнтерĕве уявланă. Перс патшин Персеполе керменĕнче пынă уяв. Кермене чĕртсе çунтарас шухăш шăпах Таис пуçне пырса кĕнĕ – варварсене тавăрмашкăн. Çав вăхăтри истори документĕсенчен нумайăшĕнче каласа кăтартнă çакăн пирки. Уйрăмах Диодир Сицилийский тата Плутарх çак ĕçе тĕрлĕ сăрăпа илемлетсе çырса хăварнă. ...Таис, Аттикăра çуралнă гетера Таис, Македони çарне парăннă Персеполе кўлнĕ пар лашапа пырса çитнĕ. Унăн çап-çара кĕлеткине хаклă чулсем кăна унтан-кунтан хупланă. Кăшкăрса саламлакан салтаксем хăйне çисе ярасла пăхни Таиса пачах та вăтантарман. Александр Македонский еркĕнĕ хăйне тĕлĕнмелле ирĕклĕн тата чăрсăррăн, çав вăхăтрах чеен те ăслăн тыткаланă уявра. Вăл пĕрре мухтанă Александа, тепре унран шўтлĕн тăрăхланă. Хĕрарăмăн хавасла кăмăлĕ Македонские те, унтан вара пĕтĕм ушкăна та куçнă. Кĕçех пĕтĕм ушкăн ĕçсе ўсĕрĕлнĕ. Пĕр кĕтмен çĕртен Таис Александра çак кермене чĕртсе çунтарма сĕннĕ. Çак утăма сăвапла ĕçпе танлаштарнă чее хĕрарăм – Ксеркса, тахçан Афинăна вилĕм çулăмĕпе çунтарнăскере, тавăрниех пулĕ ку. Çакă Александрăн Азири ĕçĕсенчен чи хăватли пулса кĕрсе юлĕ историе... Ăслă хĕрарăм шăпах кирлĕ те вырăнлă сăмахсем тупма пĕлнĕ вĕт... Историрен çакă паллă. Афинăра çав вăхăтра Таис çемйи те шар курнă. Унта перссем çитсе кĕнĕ хыççăн вĕсен хуларан тухса тарма тивнĕ. Çакăн хыççăн çемье Азире çапкаланса çўренĕ. Афинăна таврăнсан вара мрамор хула ишĕлчĕкĕсене кăна курнă. Хĕрарăм чунĕ кўренўпе, тарăхупа тулнă. Кунта вара Ксеркса тавăрас кăмăл йўçсе хăпарнă, тулса тăкăнса кайнă. Апла тăк, патша керменне çунтарни унăн чунне те кăшт та пулин çырлахтарĕ. Кермене чĕртсе ярас тивĕçе хăй çине те илме пултарать Таис.

– Пĕлччĕр, калаçчăр çынсем: Александр ушкăнĕнчи хĕрарăмсем перссене Грецишĕн çарпа флот ертўçисенчен те вăйлăрах, хаяртарах тавăрма пултарнă! – вăйлăн çунакан факелне силлесе кăшкăрнă Таис. Унăн сасси ырласа шавлама пуçланă ушкăнăннинче путнă. Пухăннисем гетерăпа пĕр майлă пулнине пĕлтерсе алă çупнă.

Патша хыççăн факела кермен çинелле Таис ывăтнă. Кедр йывăççинчен хăпартнă питĕ пысăк çурт



пĕренисем хăвăртах хыпса илнĕ. Ахăрса çунакан çулăм чĕлхисем хăвăрт сарăлнă. Çакă, паллах, хĕрарăм арçынна витернĕ чи хитре утăм мар. Анчах та çавăн пек хăватлă та вăйлă патша та хĕрарăм витĕмне парăннине пĕлтерет ку. Унтан та ытла – хăй хыççăн пĕтĕм ушкăна ертсе кайнă-çке Таис. Хĕрарăм тени мĕн ĕмĕртен шалти вăйпа палăртса тăнă эппин... Чăн та, историксем Таисăн çак утăмне паян та тĕрĕс хак пама аптраççĕ. Ку хĕрарăмăн çивĕч ăсне пĕрре мар палăртрăмăр ĕнтĕ. Унсăр пуçне, унăн культура шайĕ те çўллĕ пулнă. Персеполь керменĕ вара чаплă архитектура енĕпе палăрса тăнă. Апла тăк ăна – перси культурин ахахне – çунтарас шухăш унăн пуçĕнче епле çуралма пултарнă-ши, илемлĕ çурта чĕртсе яма алли епле çĕкленнĕ-ши? Хуравĕ пĕрре – ахăртнех, шалти туйăм вылявне ўсĕр пуç хĕртсе янă. Урă пулнă тăк хĕрарăм çапла хăтланмастчех. Çак шухăша Курций Руф палăртать, Плутарх та çаплах çирĕплетет.

Византи патша майри Феодора вара пачах урăх енпе чапа тухнă. Вăл хăйĕн вăйĕпе аркатма мар, çĕнтермешкĕн усă курнă. Вăл та малтан гетера пулнă. Болгари корольне йĕкĕлтешсе пĕртен пĕр каларăшпа “пенĕ” вăл – çапла майпа лешĕ Византие тапăнасран, вăрçă тухасран сыхласа хăварнă.

– Енчен те эсĕ пире парăнтарсан пурте Болгари... хĕрарăма çĕнтерни пирки калаçĕç. Енчен те эпир сĕнтерсен пурте эсĕ хĕрарăм айне пулнине калĕç...

Çак сăмахсенчен паллă пулнă – вăрçă кирек мĕнле вĕçленсен те корольшĕн ырă ят илсе килмĕ, пачах тепĕр май, пурте тăрăхласа кулнипе арçынна намăс кăна пулĕ...

## Авалхи Греци гетерисем

Çапла, хĕрарăм вăйсăрлăхĕпе вăйлă. Гетерăсем хĕрарăмăн çак енĕпе усă курмашкăн питех те лайăх пĕлнĕ: стратеги тĕлĕшĕнчен те, тактика енĕпе те. Ытла та илемлĕскерсем, илĕртўллĕскерсем, пултаруллăскерсем – турă вĕсемшĕн нимĕн те хĕрхенмен – хăйсен вăйсăрлăхне кăтартмашкăн пачах та шикленмен вĕсем. Гетера лартнă капкăна çакланнă арçынсем савăнсах паттăрланнă, вăйне, ăсне, пултарулăхне, хăватне кăтартнă...

Япони гейшисем пекех, гетерăсем те арçынсемпе вырăн çинче савăшмалли хĕрарăмсем пулман. Вĕсем чаплă пĕлў илнĕ, спортпа туслашнă, музыка тĕрлĕ инструменчĕпе каланă, хăнана ташăпа килентернĕ, чее пулнă, темĕнле вăйсăр арçынна та хавхалантарма пултарнă, ăна май пур таран чи малтан хăйĕн куçĕ умĕнче çĕкленĕ. Арçынна çут çанталăк вăй панă! Çакна кашни утăмрах ĕнентернĕ гетерăсем. Çук, хĕрарăм тени арçынсăр нимĕн тума та пултараймастех. Мĕн эсир? Арçын пулăшăвĕ ăна яланах кирлĕ. Хўтĕлевçине, еркĕнне гетера çакăн пирки систерсех тăнă. Асăнпа вăл философи темипе те, политика ыйтăвĕсемпе те калаçма пĕлнĕ. Хĕрарăмшăн кăтартуллă мар тепĕр ен те пулнă гетерăн – вăл питĕ ăслăн калаçма кăна мар, ...итлеме те пĕлнĕ. Мĕнле арçынна ан килĕштĕр-ха ку? Пушшех те – итлеме кăна та мар, илтме пултарнине кăтартнă. Кирлĕ самантра шăпах вырăнлă сăмах хушнă вăл. Тавлашу тапрансан вара гетера майлă самант тупса хăй арçынпа çапах та килĕшнине пĕлтернĕ. Вăт ку – искусство! Çак мелсемпе усă куракан гетерăсене çитекенни никам та пулман. Юрату “вăрçисенче” те çавăнпах çĕнтернĕ Авалхи Греци çак хĕрарăмĕсем. Гетерăсемпе арçынсем кĕлетке киленўне те илнĕ, чун шайĕнче те киленнĕ. Вĕсен чапĕ ĕмĕрсен хушши çўллĕ шайра тытăнса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ шăпах гетерăсем ўнерçĕсен, сульпторсен, музыкантсен, поэтсен, юрăçсен музисем пулса тăнă. Проституткăсемпе /вĕсене ”порнайи” тенĕ/ танлаштарма кирлĕ мар вĕсене. Гетера арçынпа хăйĕн кăмăлĕ пулсан кăна савăшнă. Кăмăла ларман арçыннăн ăна хистемешкĕн нимĕнле ирĕк те пулман. Афинăра Керамик текен хăма пулнă, арçынсем унта вăл е ку гетерăна тĕл пулмашкăн сĕнсе çырнă. Хĕрарăм килĕшсен арçыннăн сĕнĕвĕ айне вăхăта палăртса çырса хунă.

Вĕсенчен вĕренмелли паянхи чиперуксен те нумай – агрессиллĕ илемпе кăна мар, çемçе кăмăлпа та, ăспа та, чăтăмлăхпа та парăнтарма пулать.

Таис историйĕ, Афина гетерин пурнăçĕ çакна çирĕплетет – пирĕн тĕнчере хĕрарăм влаçĕ питĕ вăйлă. Ăслă хĕрарăм хăйĕн кирек те мĕнле ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пултарать, илĕртўллĕ арçынна хăватлă утăм тума хавхалантарать, туйăмли, хăюлли вара хăй хыççăн кирек кама та, кирек ăçта та ертсе кайма пултарать. Кам калать – çак виçĕ енне те пĕрлештерсен мĕнле хĕрарăм пулса тăрать?..

**/13DOORS.RU/.**

● ПЕРСЕПОЛЬ КЕРМЕНĔ. АРХЕОЛОГИ РЕКОНСТРУКЦИЙĔ.



## Саламлатпăр



*Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче пурăнакан Мария Никифоровна ГЛУХОВА январĕн 5-мĕшĕнче 75 çул тултарать. Эпир ăна юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.*

*Тулăх пурнăç пултăр*
*сан ялан,*
*Сывлăху ан хавшатăр*
*нихăçан.*

*Шупашкар районĕнчи Нина тата Ваççăн, Юрккăн çемйисем.*

## И-ХИ-ХИК

**– Хĕл Мучи хыт кукар иккен, – каласа кăтартать пĕр хĕр пĕрчи теприне.**
**– Мĕншĕн?**
**– Вăл мана хăйĕн парнине паман, анне маларах туянса шкапра пытарнă пуканене шыраса тупнă та чăрăш айне хунă...**

* * *

**Çĕнĕ çул умĕнхи каç урамра общество чарăнăвĕнче виççĕн тăраççĕ. Пĕри çӳхе пальтопа, пушмакпа, тепри кĕрĕкпе, атăпа, виççĕмĕшĕ тăлăппа, кăçатăпа.**
**– Сивĕ те вара паян, – тĕпĕртетет пĕрремĕшĕ. – Пĕр хĕрĕх градуса яхăнах ахăртнех.**
**– Ун чухлех çук-тăр, – иккĕленет иккĕмĕшĕ. – Анчах та пĕр çирĕм пурах.**
**– Калаçатăр та, – хутшăнать калаçăва виççĕмĕшĕ. – Нимĕн те сивĕ мар... Пĕр вунă градус пухăнать-и?..**

* * *

**Саккассем тăрăх çӳресе самаях хĕрнĕ Хĕл Мучи юлашкинчен ача садне çитет. Хайхискерне туххăмрах шăпăрлансем хупăрласа илеççĕ. Парне ыйтаççĕ.**
**– Эпĕ парне пĕр хутаç илсе килтĕм-ха, – тет шур сухал. – Анчах та малтан манăн пĕр ыйтăва хуравлăр – парне çавăн чухне кăна парăп. Калăпăр, Хĕл Мучи пĕр кунра вунă саккас пурнăçлать. Кашнишĕн ăна 500 тенкĕ тӳлеççĕ. Калăр-ха халĕ: пĕр кунра Хĕл Мучи мĕн чухлĕ ĕçлесе илет?**
**– 5000! 5000! – ачасем пĕрпĕринпе тавлаша-тавлашах хуравлаççĕ.**
**– Çапла пулмасăр, – тет Хĕл Мучи. – Налук вара кам тӳлет?**

* * *

**Раштав уйăхĕн 31-мĕшĕ. Больницăра телефон шăнкăртатать.**
**– Алло! – илтĕнет ача сасси. – Пирĕн пата килĕр-ха хăвăртрах: атте ăсран тайăлнă курăнать. Хĕрлĕ халат, кăçатă тăхăннă та пурне те хăй Хĕл Мучи пулнине ĕнентересшĕн...**

* * *

**Хĕл Мучин юлашки сăмахĕсем: "Пулчĕ, ачасем, парнесем вĕçленчĕç..."**

* * *

**Хĕл Мучи çыру илнĕ. "Салам, хĕрлĕ сăмса, – çырнă унта. – Манăн алăра – эсĕ пикесемпе мунча кĕнĕ сăн ӳкерчĕк. Мана мĕнле парне кирлине çитес çырура пĕлтерĕп..."**

* * *

**Çĕнĕ çулта икĕ актер Хĕл Мучи тумне тăхăнса саккассем тăрăх çӳрет.**
**– Пирĕн пата кĕрсе ман ачасене уявпа саламласа тух-ха, – тет пĕри теприне.**
**– Хăв мĕншĕн кĕместĕн?**
**– Эпĕ питĕ хаклă ыйтатăп.**

* * *

**– Ку сăмаха камран илтнĕ эсĕ? – тустарать пĕчĕк ывăлне хĕрарăм.**
**– Хĕл Мучирен.**
**– Пулма пултараймасть!**
**– Пултарать çав. Петька юр чăмаккипе ăна шăпах куçран лектерчĕ те...**

* * *

**– Хаклă Хĕл Мучи! Манăн парнене чăрăш айне ан хур, тархасшăн, тӳрех гаража кĕртсе ларт!**




### РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные от производителя – недорого, **цемент.** Доставка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**6.Песок, гравмассу, чернозём,** торф, **щебень,** кирпич. бой с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7.Кирпич** – разный, **песок, гравмассу, цемент.** Т. 89276678378.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**11.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89276689713.

**16.Сетку-рабицу** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**25.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**33.Гравмассу, песок, щебень,** гравий, **керамзит,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**37.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-906-135-52-41.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 8-927-667-95-88.

**78.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89876734754.

**110.ОКНА** пластиковые, стальные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89278404225.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ:** пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**181.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**227.Пластиковые ОКНА, стальные ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 8-987-575-47-04.

### ПРОДАЮ

**250.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**509.Заборы, ворота, калитки,** скамьи кованые. Т. 89276689587.

**842. СРУБЫ для бани.** Т. 37-28-74.

**874.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. Т. 89373866629.

**885.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**257.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т. 8-927-667-33-68. Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**843.Бычков,** коров, **тёлок,** овец, **свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### РАБОТА

**924.**Для работы в новостроящемся микрорайоне Чебоксар **требуются строители.** Т. 299970.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Ялта пурăнакан 35 çулти арçын кусса килме килĕшекен 25-45 çç хĕрпе е хĕрарăмпа çемье çавăрасшăн. Ача пурри – чăрмав мар. Т. 89613479466.


# Сăмах каçмăш

**Владислав ПЛАТОНОВ**
**/Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**



**СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Чĕпсем тытма юратакан... курак. 2. Çĕр виçи, 100 $м^2$. 5. Кантăртан ... тăваççĕ. 6. Япăх касакан ... çĕçĕ. 8. ... яланах пĕр йĕрпе чупмасть /ват. сăм./. 11. Хайхи-майхи арçури кайран кая юлчĕ те, ... патне çитсессĕн ... айне кĕрех кайрĕ /«Арçури» поэмăран/. 12. Тăрăс-тăрăс! тапар-и, ...не хуçар-и? 15. Украина писателĕ, художникĕ ... Шевченко. 16. Крымри ача-пăча курорчĕ. 18. Киевпа Харьков хулисен çынни. 20. Пăлан тытмалли вĕрен мăйкăч. 22. Шупашкарта 1780 çулта уçнă фармацевтика учрежденийĕ. 25. ...ипе арăмĕ – çӳпçипе хупăлчи.

**СУЛАХАЯЛЛА:** 1. Тытман... тирне сӳме каламан. 3. Пĕрремĕш класлă ... летчик. 4. Итали тĕп хули. 7. Нӳхрепри пичкери шĕвек. 8. Апат çине ямалли... йӳçекĕ. 10. Столярăн шăтармалли хатĕрĕ. 11. Йытта хушни. 13. Пӳрт умĕнчи çатан... . 14. Эстонири чи «вата» университет хули. 17. ... -чармак ват юман. 19. Еврази пĕр пайĕ. 21. Ăна ухмахсем валли çырман. 23. Тытăçу, кĕрешӳ. 24. Иккĕн ...ĕ çиме лайăх, тăваттăн авăн çапма /калар./.

**СЫЛТĂМАЛЛА /АЯЛТИ ПАЙĔ/:** 26. Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ те, чăваш писателĕ те Сергей ...


«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8652. Заказ 4569.